24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941 АПРЕЛЬ 17 КĔÇНЕРНИКУН 9 (5405) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

МАЙ УЯВĔ УМĔН

Пĕтĕм çĕршыв ĕçсыннисен аслă уявне — Майăн пĕрремĕшне хатĕрленет. Совет халăхĕ хăйĕн революциллĕ праçникĕсене яланах социализм строительствин пĕтĕм участокĕсенче чаплă çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илет. Çакă вăл совет çыннисен йăлине кĕчĕ, вĕсен пирвайхи тивĕçĕ пулса тăчĕ.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пуçланса кайнă социализмлă ăмăрту кашни кунах анлăрах та анлăрах сарăлса пырать. Партконференци йышăннă решенисемпе хĕçпăлланса, пирĕн совет халăхĕ промышленноçпа транспортра, социализмлă ялхуçалăхĕнче, культурăпа искусство фронтĕнче чаплă çĕнтерӳсем тăвассишĕн кĕрешет. Ăмăртун çав тери хăватлă вăйĕ халăх хушшинчен кашни кунах социализмлă ĕçĕн çĕнĕрен те çĕнĕ геройĕсене палăртса, вĕсен шутне нумайлатса пырать.

Хальхи вăхăтра, Майăн пĕрремĕшне хатĕрленнĕ вăхăтра, тăван çĕршыври заводсемпе фабрикăсенче, шахтăсемпе домнăсенче, чугунçул станцисемпе пристаньсенче, колхозсемпе совхозсенче, МТ Станцисенче — пур çĕрте те социализмлă ăмăрту вăйланăçемĕн вăйланать. Кашни рабочипе работница, колхозникпа колхозница, кашни интеллигент Май уявĕ ячĕпе тăван çĕршыв валли пысăк парнесем хатĕрлет. Производствăллă плана ытлашшипех тултарас, тăван çĕршыв валли ытларах та ытларах паха продукци туса кăларас —çакă вăл совет çыннисен хаклă ĕмĕчĕ.

Предприятисенчи, промартельсенчи ăмăртса ĕçлекен коллективсен задачи вăл—талăкăр графика пурнăçа анăçлăн кĕртсе пырасси пулать. «Плана предприяти тăрăх, халиччен пулнă пек, вăтамран илсе çеç мар, ăна кашни кун, кашни цехра, кашни бригадăра, кашни станок çинче, кашни сменăра тултарса пымалла» (Маленков). Халичен усă курман резервсене шыраса тупса, вĕсемпе туллин усă курас пулать, тирпейсĕрлĕхе тата тĕрлĕ сухатусене хирĕç татăклăн кĕрешсе, продукцин пахалăхне хăпартмалла, унăн хăйне ларакан хакне йӳнетмелле.

Малта пыракан заводсемпе фабрикăсен, промартельсен тата ытти предприятисен коллективĕсем социализмлă ăмăртура сахал мар çитĕнӳсем тума пултарчĕç. Вĕсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ кăтартса панă çитменлĕхсене пĕтерсе пырса, пĕрремĕш кварталти плана срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Сăмахран, Чăвашкоопинсоюз системинчи предприятисем кварталти плана 132,7 процент тултарса, тăван çĕршыв валли планран ирттерсе 392 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Çĕмĕрлери райпищекомбинат коллективĕ те пĕрремĕш кварталти плана 115 процент ытла пурнăçланă.

Çĕмĕрлери древкомбинатăн виççĕмĕш номерлĕ цехĕ пĕрремĕш кварталти плана 102,6 процент тултарнă. Халĕ цех коллективĕ, Май умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, апрель уйăхĕнчи плана срокчен виçĕ кун малтан тултарса, планран ирттерсе 30 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларма обязательство илнĕ. Цехра производствăллă çĕкленӳ хăватлăн вăйланса пырать. Ăмăртун пирвайхи кунĕсенче стахановецсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Фионов, Шалфеев, Алексеева юлташсем кашниех нормăсене 150—200 процент тултараççĕ.

Куславкка комбинатĕнчи хăма çурăкан тата типĕтекен цехсем апрелĕн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнчи плана ытлашшипех тултарнă. Комбинат коллективĕ апрельри плана срокчен тултарассишĕн кĕрешĕве тухнă.

Канашри вагонсем юсакан тата Улатăрти паровозсем юсакан заводсен коллективĕсем пĕр-пĕрнипе социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Вагониксем апрель уйăхĕнче планран ирттерсе çирĕм тоннăллă çĕнĕ платформăсем 10 туса кăларма, ĕç тухăçлăхне 13,5 процент ӳстерме, продукцин хăйне ларакан хакне 7 процент йӳнетме пулчĕç. Паровозниксем планран ирттерсе пĕр паровоз туса кăларма обязательство илчĕç. Çĕмĕрле комбиначĕн пĕтĕм коллективĕ апрель уйăхĕнче планран ирттерсе çĕр пин тенкĕлĕх продукци туса кăларассишĕн, кварталти плана июнĕн 26-мĕшне тултарассишĕн кĕрешет.

Производство техникине лайăх пĕлсе çитнĕ, культурăллă тата пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен стахановецсен речĕ те кунсеренех йышланса пырать. Çĕмĕрлери виççĕмĕш номерлĕ цехри стахановец Д. Фионов юлташ апрелĕн 9-мĕшĕнче хăйĕн нормине 450 процент тултарнă. Унăн çитĕнĕвĕ ыттисемшĕн паха пример пулса тăрать, ыттисем те унпа тан ĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. Халĕ çак цехра нормăна тултарайман рабочисен хисепĕ кашни кунах чакса пырать. Улатăрти паровозсем юсакан заводри строгальщик — «За трудовое отличие» медальпе наградăланă стахановец — Канов юлташ апрельри хăйĕн нормине виçĕ хут ытла тултарма обязательство илнĕ. Ăна вăл ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Канашри вагонсем юсакан заводри Чернухин юлташ ертсе пыракан столярсен группин апрель уйăхĕнче 19 вагон юсамалла. Çак вагонсене вĕсем апрелĕн 25-мĕшне юсаса çитерме ĕмĕтленеççĕ.

Колхозалă ялсенче те халĕ хĕрӳллĕ ĕç пырать. Тырпул тухăçне ӳстернĕшĕн тата вылăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне хăпартнăшăн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени колхозниксен тата колхозницăсен производствăллă активлăхне çĕклерĕ. Пирĕн республика Мордва тата Мари республикисемпе ăмăртса ĕçлет. Колхозсем, бригадăсем, звеносем—колхозниксен анлă масси çак ăмăртура хисеплĕ вырăна, малти рете йышăнассишĕн кĕрешет. Халĕ çуракине тухма пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе ĕç хĕрсе, сарăлса пырать. Пирĕн республика çуракине тухăс умĕнхи тапхăрта пурăнать. Паянхи задача — уйăхирти ĕçсене кĕске срокра, пысăк пахалăхпа ирттерме мĕнпур колхозсемпе бригадăсене тата звеносене хатĕрлесе çитересси пулать.

Социализмлă ăмăртура малта пыракансен кая юлакансене пулăшса пымалла. Предприятисенче кулленхи нормăна тултарса пырайман рабочисем сахал мар-ха. Çавна пула ĕнтĕ предприятисем график тăрăх ĕçлесе пырайманçĕ, производствăллă плана тултарайманçĕ. Çакă вăл чылай рабочисем тухăçлăн ĕçлемен тата техникăна вĕренсе çитмен пирки пулса пырать. Çавăнпа та вĕсене лайăх ĕçлеме вĕрентни, малта пыракансен паха опычĕсемпе, ĕç меслечĕсемпе паллаштарни кирлĕ. Ку тĕлĕшпе предприятисенчи стахановецсен шкулĕсем пит те пысăк усă пама пултараççĕ. Нормăна пур рабочисем те тултарса пыччăр — çакăн пек задача тăрать хальхи вăхăтра.

Социализмлă ăмăртупа стахановла движенине кулленкун ертсе пыни кирлĕ. Анчах пирĕн нумай предприятисенчи профсоюз тата парторганизацисем социализмлă ăмăртупа стахановла движение çитĕлĕкĕр ертсе пыраççĕ-ха. Хăшпĕр çĕрте çакăн пек те пулать: уяв умĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнни çинчен шавласа илеççĕ те, вăхăтлăха пысăках мар çитĕнӳсем тунипе мăнкăмăлланса ларараççĕ. Уяв иртсе кайсан каллех лăпланаççĕ, стахановла движенине пур майсемпе те аталантарса тата стахановецсен пуçарулăхне ертсе пырасси çинчен каллех манса каяççĕ.

Социализмлă ăмăртупа стахановла движенине çакăн пек бюрократла майсемпе ертсе пырас йăлана пĕтĕмпех пĕтермелле. Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту çĕкленĕвне вăйлатнăçемĕн вăйлатса пымалла, уяв хыççăн ăмăрту сӳнсе ан лартăр, вăл татах та ытларах, анлăрах сарăлса пытăр. Паян ĕнерхинчен лайăхрах, ыран паянхинчен аванрах ĕçлемелле.

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V Сессийĕ

Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕн 1941 çулти апрелĕн 16-мĕшĕнчи ларăвĕсем çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРЎ

Ĕнер, апрелĕн 16-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре, Советсен Çурчĕн залĕнче Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V Сессийĕн тăваттăмĕш ларăвĕ пулчĕ.

Председатель пулса ертсе пыракан—Чăваш АССР Верховный Совечĕн Председателĕ депутат **Н. П. Павлов.**

Сесси кун йĕркинчи пĕрремĕш пункт тăрăх пренисене вĕçлерĕ.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕн тăваттăмĕш ларăвĕнче ЧАССР Финанс Халăх Комиссарĕ **Ф. Т. Семенов** юлташ хăй Чăваш АССР Республикин 1941 çулти бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх сăмах тухса каларĕ. Çавăн пекех ЧАССР Верховный Совечĕн Бюджет Комиссин председателĕ **К. Д. Медянин** депутат хăй Сессире тунă содоклад тăрăх юлашки сăмах каларĕ.

Депутат **К. Д. Медянин** сĕннĕ тăрăх, Сесси Чăваш АСС Республикин 1941 çулти бюджетне доходсем тата расходсем тăрăх уйрăмăн пăхса тухса сирĕплетрĕ. Сесси Чăваш АСС Республикин 1941 çулти бюджечĕ çинчен Закон йышăнчĕ.

Унтан Чăваш АССР Верховный Совечĕ V Сессин кун йĕркинчи иккĕмĕш пунктне тăрăх—Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ III-мĕшпе V-мĕш Сессисем хушшинче кăларнă тата Чăваш АССР Верховный Совечĕ çирĕплетме тивĕçлĕ Указене çирĕплетесси çинчен—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ депутат **Г. М. Гусев** доклад турĕ.

Сесси—Чăваш АССР Конституцийĕн 44-мĕш тата 64-мĕш статьисене хушса çырасси çинчен пурте пĕрасла пулса Закон йышăнчĕ.

Сесси Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ **В. Г. Григорьев** тата **В. Т. Харитонов** юлташсене Чăваш АССР Совнарком Председателĕн Заместителĕсем пулма уйăрса лартасси çинчен кăларнă Указене çирĕплетрĕ. Çавăн пекех Сесси Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ **Ф. В. Васильев** юлташа Чăваш АССР Госпланĕн председателĕ пулма уйăрса лартасси çинчен кăларнă Указа тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсем пулма уйăрса лартасси çинчен кăларнă Указсене çирĕплетрĕ:

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ пулма—**К. Е. Евлампьев** юлташа;

Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх Халăх Комиссарĕ пулма—**И. В. Новиков** юлташа;

Чăваш АССР Социальнăй обеспечени Халăх Комиссарĕ пулма—**П. С. Меценатова** юлташа;

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ пулма—**Н. Г. Малов** юлташа;

Чăваш АССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕ пулма—**П. В. Васильков** юлташа;

Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ пулма—**Н. И. Барсков** юлташа;

Чăваш АССР Государство Хăрушсăрлăхĕн Халăх Комиссарĕ пулма—**С. Е. Белолипецкий** юлташа;

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен управлени начальникĕ пулма—**В. Т. Ржанов** юлташа;

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Топливо промышленность управленин начальникĕ пулма—**А. В. Стуриков** юлташа.

Чăваш АССР Верховный Совечĕ малалла Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ **В. М. Шиверов** тата **Ф. А. Артемьев** юлташсене Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕсем пулса ĕçлессинчен хăтарасси çинчен кăларнă Указсене çирĕплетрĕ.

Унтан Сесси депутат **Г. М. Гусев** сĕннине пурте пĕрасланă йышăнса, **И. Н. Николаев** юлташа Чăваш АССР Верховный Суд председателĕн ĕçĕсенчен, Н. Г. Бундин, А. А. Дубровина, А. Т. Краснов тата П. Р. Шестипалов юлташсене Чăваш АССР Верховный Сучĕн членĕсем пулса ĕçлессинчен хăтарчĕ.

Чăваш АССР Верховный Сучĕн председателĕ пулма Сесси **М. А. Алексеев** юлташа, Чăваш АССР Верховный Сучĕн членĕсем пулма **А. Д. Тунейкин** тата **Г. Г. Уськин** юлташсене суйларĕ.

Сесси пурте пĕрасланă йышăннă решение Чăваш АССР Наркомздравĕ çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ, Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарне **Н. С. Соколов** юлташа Наркомздравăн ĕçĕнчи çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме, унăн ĕçне тĕпренех лайăхлатса яма хушрĕ. Чăваш АССР Верховный Совечĕ Чăваш АССР Совнаркомне Наркомздрав ĕçĕсем çине уйрăмах çăвăрăнса пăхма, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ Наркоматăн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерессине пурнăçа кĕртмесен ăна вырăнтан кăларасси çинчен ыйту лартма хушрĕ.

Кун хыççăн председатель пулса ертсе пыракан **Н. П. Павлов** юлтат Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕн кун йĕркинчи ыйтусене пурне те пăхса тухни çинчен каларĕ те Сесси хупăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Таджик искусствин Мускаври декади

„Коваи Охангар“ спектаклĕн çитĕнĕвĕ

Апрелĕн 15-мĕшĕнче ССР Союзĕн Пысăк театр филиалĕн сцени çинче Государствăн Таджикистанри операпа балет театрĕ хăйĕн виççĕмĕш постановкине — «Коваи Охангар» («Тимĕрçĕ Кова») операна кăтартрĕ.

Опера либреттине поэт-орденоносец А. Лахути Фирдоусин «Шах Наме» ятлă вилĕмсĕр поэминчи ытларах чаплă эпизодсем тăрăх — тимĕрçĕ Кова çинчен калакан легенда тăрăх çырнă. Çак легенда тимĕрçĕ Кова хăйĕн тăван халăхне пусмăрлакан ютçĕршывсенчи пусмăрăçсене хирĕç пуçланă восстание хăйĕн сăран сапунне сăнă çине тирсе, восстани ялавĕ вырăнне çĕкленни çинчен калать.

Нацjanлĕ опера искусствине аталантарса çитĕнтермелли тата вăйлатмалли çулĕçсене çине тăрса шыракан творчествăллă коллектива спектакль курма пынă çынсем ăшшăн саламланă.

(ТАСС).

СССР Наркомюстĕнче

Судпа следстви органĕнĕсем чылай çĕрте çăмăл автомашинăсем çинче горючине нормăран ытлашши расходланине палăртнă. Çак преступленисене тунăшăн айăплă çынсене суда парса ответ тыттарнă.

Мускав хулинчи Ленинскипе районри виннăмĕш участокри халăх судĕнче Авиационно-технологически институтăн гараж начальникĕн В. Е. Крупочкинăн ĕçне пăхса тухнă. Бензина нормăран ирттерсе расходланине витес шутпа Крупочкин ытти автомашинăсем валли панă лимит кĕнекисемше усă курнă. Крупочкина пĕр çулталăк та 6 уйăх хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă. Çакăн пек преступленисем тунăшăнах Сокольнически районри пĕрремĕш участокри халăх судĕ «Буревестник» фабрикин транспорт отделĕн начальникне В. Р. Салупаева. Кировски районри пилĕкмĕш участокри халăх судĕ Автомостснаб тресчĕн заправщицине З. С. Градусовăна суд умĕнче ответ тыттарнă. (ТАСС).



Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V Сессийĕ. Унерчĕн çинче: Верховный Совет депутачĕсем перерыв вăхăтĕнче. Сулахайăн сыхтăмалла: И. В. Дубов, Е. Д. Дмитриева, В. Т. Харитонов, М. А. Андреев тата П. Д. Краснов.

Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

ФЗО шкулĕсенче вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ

Апрелĕн 15-мĕшĕнче вăрман промышленноçĕнчи ФЗО шкулĕсенче вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Пирĕн республикăра вăл шкулсенче пĕрремĕш наборта 1000 çын вĕренмелле. Çамрăксем, пĕтĕмпе илсен, шкулсене пырса çитнĕ. Вĕсем пурте вăрман промышленноçĕнче квалификациллĕ рабочисем пулса ĕçлеме ĕмĕтленеççĕ.

ФЗО шкулĕсем вĕренекенсем валли лайăх общежитисем, столовăйсем, клубсем уйăрса панă. Çавăн пекех мунчасем, прачечнăйсем пур. Вĕренӳре кирлĕ инструментсем хатĕрленĕ. Шкулсенче ĕçлеме чи лайăх мастерсене уйăрнă. Работниксене пĕтĕмĕшпех илсе çитернĕ.

Шкулта вĕренекенсене тумтирсем, урана тăхăнмалли япаласем илсе панă, общежитисенче выртса тăма кирлĕ япаласем хатĕрленĕ.

ФЗО шкулĕсем хăйсем патне килекем вĕренекенсене чугунçул станцине пырсах кĕтсе илнĕ. Чугунçул станцисенчен шкула çитиччен автомашинăсемпе е лашасемпе илсе кайнă.

Виçĕмкун ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Унта вĕренӳ программи çинчен тата шкул умĕнче тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-явнă. Вăл пухусенче вĕренекенсем отлично паллăсемпе вĕренме, дисциплинăллă пулма обязательствăсем пачĕç. Вĕренекенсене группăсене уйăрнă.

Ĕнер ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсем практикăллă ĕçсемпе паллашрĕç. Вĕсем хăйсене вĕрентме уйăрнă вăрман участокĕсене кайса курчĕç. Мастерсем вăрманта ĕçленĕ чухне инкек-синкех пулассан сыхланасси çинчен каласа ăнлантарнă. Инструментсемпе мĕнле ĕçлемеллине кăтартса панă. Паянтан пуçласа ФЗО шкулĕсенче программа тăрăх вĕренме тытăнаççĕ.

ФЗО шкулĕсенче вĕренӳ çулне кĕтсе илме хатĕрленес тата унта çамрăксене вĕренме илес ĕçе пĕтĕмĕшпех ăнăçлăн ирттернĕ. Апла пулин те хăшпĕр шкулсенче пысăк çитменлĕхсем пурри, вĕсем занятисене тытăнма хатĕрленсе çитменни палăрчĕ.

ФЗО шкулĕсене призыв йĕркипе вĕренме илес енĕпе ĕçлекен районри комиссисем хăйсен ĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçламан. Хăшпĕр районсенче шкулсене вĕренме илмелли çинчен кăларнă инструкцине пăхăнман. Çав инструкци тăрăх, шкулсене вĕренме 17 çул тултарнă çамрăксене илмелле пулнă. Çак йĕркене хăшпĕр районсенче пăснă, çул çитмен çамрăк ачасене тата сывлăх енчен çирĕп мар çамрăксене вĕренме янă.

Районри комиссисем çителĕксĕр ĕçленĕ пирки Улатăрти шкултан 14 çын, Йĕпреçрен — 23 çын, Çĕмĕрлерен — 14 çын каялла ямалла пулнă. Мĕншĕн тесен, çав çамрăксем 17 çула çитмен. Ку тĕлĕппе Çĕрпӳ районĕнче уйрăмах япăх ĕçленĕ. Районри комисси председателĕ Петров юлташ ФЗО шкулĕсене вĕренме илес ĕçе урăх çын çине хунă пулнă. Çакăн пек ĕçленĕ пирки çул çитмен ачасене пурĕ 8 ача илнĕ. ФЗО шкулĕн çав ачасене каялла яма тивнĕ. Çавăн пекех Çĕмĕрле, Элĕк, Тăвай, Куславкка районĕсенчи комиссисем те инструкцине пăснă. Кунсăр пуçне вĕренме илнĕ ачасене те шкула пурне те ярса çитермен.

Улатăр районĕнчи организацисем ФЗО шкулне вĕренме пыракан çамрăксене япăх кĕтсе илнĕ. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ ФЗО шкулне вĕренме килнĕ çамрăксем патне пачах пыман. ФЗО шкулĕнче ĕçлекенсем те вĕренекенсемпе ĕçлес ĕçе пирвайхи кунсенче кирлĕ пек организацилемен пулнă.

Кирери ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем валли одеялсем вăхăтра кӳрсе килмен. Вĕсем валли уйăрнă одеялсем Канаш хулинче пĕр уйăх выртнă.

Чăвашлеспродторг конторин (управляющийĕ Федоров юлтат) ФЗО шкулĕсем валли спецодеждăсем хатĕрлемелле пулнă. Малтанхи вăхăтра çак контора спецодеждăсем хатĕр тесе пĕлтернĕ. Анчах спецодеждăсем ФЗО шкулĕсенче пуринче те çитмеççĕ. Йĕпреçри шкулта пачах та çук.

Вăл тумтирсене артельсене çĕлеме панă пулнă. Йĕпреçри «Кооперсоюз» артелĕн фуфайкăсемпе брюкисем 150 мăшăр, Кирери артелĕн — 200 мăшăр тата Вăрнарти артелĕн — 100 мăшăр çĕлемелле пулнă. Çак артельсем паянхи куна пĕр мăшăр та çĕлемен. Наркомлес руководителĕсем те ку ĕçрен айккинче тăнă. Спецодеждăсене апрелĕн 1-мĕшне хатĕрлесе çитермелле пулнă. Наркомлес артельсем заказа мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслемен.

Пирвайхи кунсенче палăртнă çитменлĕхсем вĕренӳ ĕçĕнче пысăк чăрмав кӳреççĕ. Тивĕçлĕ организацисем ФЗО шкулĕсене куллен пулăшса пымалла. Районри призыв комиссисен каялла янă çамрăксем вырăнне çирĕп сывлăхлă, 17 çул тултарнă çамрăксене ФЗО шкулĕсене вĕренме илсе çитермелле. Вĕсене халех хăйсен вырăнĕсене ăсатса ямалла.

ВЛКСМ райкомĕсем ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсемшĕн куллен тăрăшмалла. Вĕренĕвĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах, вĕренекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçсене лайăх йĕркелемелле. Вăрман промышленноçĕ валли кĕске вăхăтрах пысăк квалификациллĕ рабочисене вĕрентсе хатĕрлеме кирлĕ условисем туса памалла.

Монголи Халăх Республикинчи ĕçсыннисем Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă Пакта саламлаççĕ

УЛАН-БАТОР, апрелĕн 14-мĕш. (ТАСС). ССР Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен Пакт тунă май тата Монголи Халăх Республикипе Маньчжоу-Го территорийĕсен тĕрĕс-тĕкеллĕхне тата вĕсен чиккисен никам пырса тĕкĕнмелле мар положенине пĕр-пĕри хисеплесси çинчен калакан Декларацине алă пусса çирĕплетни çинчен калакан Декларацине алă пусса çирĕплетни çинчен пĕлтернĕ, çак пĕлтерĕве митинг пысăк хавасăлăпа итленĕ.

Хăйĕн резолюцийĕнче митинг мирĕн сталинла политики тунă çак çĕнĕ чăлă çĕнтерĕве хĕрӳллĕн саламлать.

Митинг хушнипе Пĕчĕк Хурал Президиумĕ, Министрсен Совечĕ тата Монголири Революциллĕ Халăх Партийĕн Центральный Комитечĕ Аслă Сталин тата Совет Правительствин пуçлăхĕ Молотов юлташ патне саламлă телеграмма янă.

Шахматистсен матч-турнирĕ

Апрелĕн 14-мĕшĕнче Смысловпа Керес 12-мĕш турта выляса пĕтерейместĕр хăварнă партие выляса пĕтернĕ, Болеславскипе Бондаревски 2-мĕш турта вылямасăр сиктерсе хăварнă партие выляннă. Лилиенталь халĕ те чирлĕ-ха, çакна пула вăл Ботвинникпе выляса пĕтермелле пулнă партие выляннă пĕтмен. Çак партире Болеславскин ытлашши икĕ пешка, выляса илме пысăк шанчăк пур.

Пурĕ 13 тур выляннă ĕнтĕ. Малта халиччен пекех Ботвинник пырать, вăл 10 партирен 6,5 очко выляса илнĕ. Ун хыççăн Смысловпа Керес пырассĕ, вĕсем 12 партирен 6 шар очко илнĕ. Бондаревски 9 партирен 4,5 очко выляса илнĕ, Болеславски — 8 партирен 3,5 очко, Лилиенталь — 9 партирен 3,5 очко илнĕ.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче 14-мĕш тур пулать. Унта Болеславскипе Смыслов, Ботвинникпе Бондаревски, Лилиенталь па Керес выляççĕ. (ТАСС).

Сайра тĕл пулакан япала

Пулă ĕрчетес ĕçĕн Сурçĕр-Каспи Управленийĕ çуйăн пулăсем пухăнса выртакан путăксенче вĕсене тытас ĕçе организацилеме. Атăл тинĕсе юхса тухнă çĕрте çак куçенче интереслă ĕç пулса иртнĕ. Çуйăнсем выртакан путăксенчен пĕрне янă сĕрекене пулăссем çыран патне аран-аран çеç туртса çитернĕ. Çав сĕрекене 500 центнер чухлĕ çуйăм пулăсем лекнĕ.

Украинăра ботаника сачĕ тăваççĕ

Киевра УССР Наукăсен Академийĕн ботаника садне тума тытăннă. Çакă вăл республикăри чи пысăк сад пулать.

Дендропаркра 100 тĕрлĕ ӳсĕк-тăрансем лартнă та ĕнтĕ. Садăн çак отделĕнче çĕршыври питех те пуян коллекци пулать, унта тĕнчере ӳсекен 3.000 тĕрлĕ ӳсĕк-тăран пулать. «Человек — творец новых растительных форм» ятлă отделра улма-çырла йывăçсисем 400 сорта яхăн лартаççĕ, тĕштырă, пахча-çимĕç, эмельсем тумалли, эфирлă-çуллă культурăсемпе ытти культурăсен 1000 сортне акаççĕ.

Марганец рудисем кăлармалли çĕнĕ вырăнсем

Улу-Келяк районĕнчи Тюлькю-Тюбе ялсоветĕн территорийĕ çинче (Башкирире) геолог К. П. Столбков марганец рудисем питĕ нумай сыхланса тăракан вырăна тупнă. Рудă выртакан лапăка палăртма кунта геологсклле разведка партийĕ пырса çитнĕ.

Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен министрĕ г. Иосука Мацуока И. В. Сталин юлташ патне янă телеграмма

Унăн Превосходительствине господин СТАЛИНА

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Эсир мана çавтери юратса, чĕререн кăмăлласа йышăннăшăн Сирĕн Превосходительствăна тарăнăн тав тума мана ирĕк парăр.

Паян алă пусса çирĕплетнĕ Пакт пуринчен малтан, Эсир ĕçе питех те витĕр курса тăнин результачĕ пулса тăрать. Эпĕ ĕненетĕп, тулашри политикăна — паянтан пуçласа пĕр-пĕрне шаннипе туслăх çинче çирĕпленсе тăракан тулашри политикăна пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре çак Пакт пирĕн нацисене иккĕшне те хавхалантарса пыракан çăлкуç пулса тăрĕ.

Эпĕ Сирĕн Превосходительствăна сывлăхпа телей сунатăп.

ИОСУКЕ МАЦУОКА.

Ярославль, 1941 çулти апрелĕн 13-мĕш.

И. В. Сталин юлташ Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ г. Иосуке Мацуока патне янă телеграмма

ОМСК ХУЛИ

Японин Ютçĕршыв Ĕçĕсен Министрне господин Иосуке Мацуокăна

Эсир каласа пĕлтернĕ туйăмсемшĕн тата пирĕн çĕршывсем хушшинчи отношенисене пĕр-пĕрне шанса тăнипе туслăх никĕсĕ çинче малалла аталантарса пыма тăрăшнăшăн питех те кăмăлласа тав тăватăп. Шанатăп, ССР Союзĕпе Япони хушшинче тунă Пакт çак историллĕ пысăк задачăна пурнăçлас ĕçе лайăх пулăшнă.

Сире, господин Министр, сывлăхпа пулма тата çитĕнӳ тума сунатăп.

И. СТАЛИН.

Мускав, 1941 çулти апрелĕн 15-мĕш.

ЧĂВАШ АССР 1-мĕш СОЗЫВРИ ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН V СЕССИЙĔ

ЧĂВАШ АССР 1941 ÇУЛТИ БЮДЖЕЧĔ ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОКЛАД ТĂРĂХ ПЫРАКАН ПРЕНИСЕМ

Д. А. Андреев депутат сăмахĕ

Депутат юлташсем! ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ пирĕн çĕршывăн халăх хуçалăхне малалла аталантарса пымалли питĕ пысăк план çирĕплетрĕ. Çак аслă плана пăхăнса СССР тата РСФСР Верховный Совечĕсен иртнĕ Сессийĕсенче СССР тата РСФСР бюджечĕсене йышăнса çирĕплетнĕ.

Пирĕн партипе правительство тата аслă Сталин юлташ ертсе пыни пирĕн çĕршыв умне ВКП(б) XVIII конференцийĕ кăларса тăратнă историллĕ задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама май парать.



Орденлă Чăваш республикин бюджечĕ республикăн пĕтĕм халăх хуçалăхĕ пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе пынине кăтартать.

Пирĕн задача бюджета йышăнса çирĕплетнипех пĕтмест. Пирĕн çак бюджета пур енчен те тултарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлес пулать. Ку вăл пирĕн республикăри наркоматсен ĕçне тĕпренех лайăхлатма хушать. Тӳрех калас пулать, халĕ пирĕн наркоматсен ĕçĕнче çитменлĕхсем сахал мар-ха. Хăшпĕр наркоматсем хăйсен предприятийĕсене тĕплĕн пĕлсе ертсе пымаççĕ-ха, ыйтусене татса парас ĕç çине тивĕçлипе пăхмаççĕ.

1939 çулта Çавал шывĕн çыранĕсене çирĕплетес ыйтăва пуçарнăччĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕ çак ĕçе йышăннă, ăна тума 46.000 тенкĕ укçа та панă, çав çулти июнь уйăхĕнчех 16 пин тенкине каялла илнĕ, юлашки юлнă укçипе материалсем кăна хатĕрленĕ. Çапла вара 1940 çулта Çавал шывĕн çыранĕсене çирĕплетеймен. Çак ĕçĕн сметине çурçул ытла тунă, тунă хыççăн та ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ пулнă Артемьев юлташăн сĕтелĕнче 1941 çулччен выртнă. Сметăна пăхса тухнă хыççăн ăна пăрахăçа кăларнă, çак брак ĕçе тума 14.500 тенкĕ укçа расходланă. Çак ĕçшĕн Наркомхоз пуринчен ытларах ответлă, вăл пуçарнă ĕçе ертсе пыма пултарайман. 1941 çулта Çавал шывĕн çыранĕсене çирĕплетеймесĕр ăна пăрахăçа кăлармалла. Çавăнпа та çак ĕçе йышăннă, ăна тума 46.000 тенкĕ укçа та панă, çав çулти июнь уйăхĕнчех 16 пин тенкине каялла илнĕ, юлашки юлнă укçипе материалсем кăна хатĕрленĕ. Çапла вара 1940 çулта Çавал шывĕн çыранĕсене çирĕплетеймен. Çак ĕçĕн сметине çурçул ытла тунă, тунă хыççăн та ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ пулнă Артемьев юлташăн сĕтелĕнче 1941 çулччен выртнă. Сметăна пăхса тухнă хыççăн ăна пăрахăçа кăларнă, çак брак ĕçе тума 14.500 тенкĕ укçа расходланă. Çак ĕçшĕн Наркомхоз пуринчен ытларах ответлă, вăл пуçарнă ĕçе ертсе пыма пултарайман. 1941 çулта Çавал шывĕн çыранĕсене çирĕплетме каллех 60 пин тенкĕ укçа пама бюджета кĕртнĕ. Пирĕн çак укçапа пĕлсе усă курмалла, палăртнă ĕçе пурнăçа кĕртмелле. Анчах та халех çак 60 пин тенкĕ укçана смета тата проект тăвас ĕçе расходласа пĕтерес хăрушлăх пур. Ку вăл тĕпчев ĕçне тума 30 пин тенкĕ пăхнинчен те курăнать.

Ман шутпа Наркомхоз çак ыйту çине тĕплĕн шухăтласа пăхман. Государство укçи-тенкине çакăн пек расходлама юрамасть.

Наркомхоз бюджета доход пайĕпе 57,6 процент тултарнă пулсан, расход пайне вара 94 процент тултарма ĕлкĕрнĕ. Наркомхоз малашне те çакăн пек начар ĕçлесен, вăл хăйĕн 1941 çулти бюджетăн доход пайне тултарма пултараймасть.

Çĕрпӳри электростанци 1941 çулти пĕрремĕш кварталра пурĕ те 27 кун кăна ĕçленĕ. Наркомхоз хăйĕн коммунальнăй предприятийĕсене тивĕçлипе ертсе пымасть. Наркомхоз çаксене шута илсе, вĕсене малашне тумĕ тесе шутлатăп эпĕ.

Пурăнмалли çуртйĕрсен строительствине илер. Пирĕн республикăри строительство организацийĕсем строительство ĕçне йĕркеллĕ туса пымаççĕ. Шупашкарти строительство ĕçне илер-ха. Кунта йĕрке сахал. Фактсене илме инçе каймалла мар, Карл Маркс урамĕнчи çуртсенчен пĕрине скоростной методпа тăваççĕ пулин те, ăна çулталăк çурă ытла тăваççĕ.

Халĕ ĕнтĕ планировани ĕçĕ çинче чарăнса тăмалла. Госплан план тунă чухне чи элементарлă ĕçсене манса хăварать. Çĕрпӳри «Перламутр» фабрикин 20 пин штука шăл тасатмалли щетка туса кăлармалла, шăртне ăçтан тупмалла, çакна Госплан асăрхаман. Çĕрпӳри примус горелкисене тăвакан завода илер. Примус горелкисене тума кирлĕ вĕтĕ пралуксене камăн тăратмалли халĕ те палламан мар.

Малалла эпĕ Çутĕç Халăх Комиссариначĕн çитменлĕхĕсем çинчен каласшăн. Çĕрпӳ хулинче ачасен çурчĕ пур, унта 300 ача ытла воспитани илеççĕ. Çак çурта йĕркене кĕртес пирки сахал мар решенисем йышăннă, анчах та ĕç лайăхланни курăнмасть-ха.

Юлашкинчен Çĕрпӳ районĕн бюджетне планлас ыйту çинчен каламалла. Çĕрпӳ районĕнче туберкулез диспансерĕ пур, ăна тĕпренех юсамалла. Çавăнпа та эпĕ çак диспансера юсама 10 пин тенкĕ укçа пама ыйтатăп. Çавăн пекех Çĕрпӳри больницăн кухнине тата прачечнăйне юсама 15 пин тенкĕ пама ыйтатăп.

Юлташсем! 1941 çулта пирĕн питĕ пысăк ĕçсем тумалла. 1941 çулта та пирĕн республика коммунистсен партийĕ, çулпуç тата учитель Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тăвас пирки нимĕн иккĕленмелли те çук! (Алă çупаççĕ).

И. А. Александров депутат сăмахĕ

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Совнаркомĕ Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессине пăхса тухма тата çирĕплетме тăратнă Чăваш республикин 1941 çулти бюджечĕ, пирĕн халăх хуçалăхĕнче тунă çитĕнӳсене уççăн кăтартса парать. Вăл халăхăн культури тата сывлăха сыхлас ĕç пысăк хăвăртлăхсемпе ӳссе пынине кăтартать.

1913 çулта пирĕн Вăрмар районне кĕрекен ялсенче пурĕ 24 пуçламăш шкул пулнă. Вăл шкулсенче 875 ача вĕреннĕ, унта 43 учитель ĕçленĕ. Вăтам шкулсемпе ытти культурăллă учреждениесем çинчен асăнмалли те çук, вĕсем пулман.

Халĕ пирĕн районра 44 шкул. Вăл шутран туллимар вăтам шкулсем 15, вăтам шкулсем—5. Çав шкулсенче пурĕ 7754 ача вĕренет, 310 учитель ĕçлет. Кунсăр пуçне халĕ пирĕн 28 вулав çурчĕ, ялти библиотекăсем—2, районти культура çурчĕ, районти библиотека пур.

Пирĕн Вăрмар районĕн бюджечĕ 1937 çулта 2 миллион та 827 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1940 çулта 3 миллион та 543 пин тенке çитнĕ, вăл 25 процент ӳснине кăтартать. 1941 çулта пăхнă проект тăрăх 3 миллион та 696 пин тенкĕ пулмалла.

Патша саманинчи чăваш ялĕ, чăваш халăхĕ çакăн пек ĕçсем çинчен пĕлмен, ун çинчен шухăшлама та пултарайман.

Пирĕн çĕршыва вăрçă хăрушлăхĕсенчен сирсе, хамăр пуянлăха тата ытлатрах ӳстерме май туса панăшăн, тăван çĕршывăн хуçалăхпа оборона тĕреклĕхне татах ӳстерсе пынăшăн, халăх пурнăçне лайăхлатма, культурине ӳстерме май туса панăшăн, эпир аслă çулпуç Сталин юлташа тав тума тивĕçлĕ. (Алă çупаççĕ).

Депутат юлташсем! Эпĕ малалла Вăрмар районĕн 1941 çулти бюджет проекчĕн хăшпĕр çитменлĕхĕсем çинче чарăнса тăрасшăн.

Вăрмар район центрĕнчи культура çурчĕ чугунçул баракĕнчен майлаштарса тунă çуртра вырнаçнă. Вăл çуртра темĕн чухлĕ ăшă тума тăрăшсан та ăшăтса çитерме çук. Çитменнине тата ку çурт пĕчĕк, унта 100 çынна яхăн ĕç вырнаçать. Вăрмар поселокĕнче 350—400 çын вырнаçакан культура çурчĕ кирлĕ.

Çитменнине тата районти культура çурчĕ элеватор территорийĕ сывлăкĕнче пирки, районри пушар инспекцийĕ ку çуртри кăмакасене хутма та чарнă. Çавăнпа та районти культура çуртне тепĕр вырăна куçарса лартса ремонт тума бюджетра 15 пин тенкĕ пăхнă. Ку ыйтăва çителĕксĕр. Эпĕ Вăрмар районĕнчи культура çуртне куçарса ремонтлама 25 пин тенкĕ укçа пама ыйтатăп.

Район центрĕнче благоустройство тăвасси питĕ пысăк ĕç. Вăрмар район центрĕнче паян куна çитсе те электричество, радио тата кино çук. Учреждениесене, хваттерсене линисем кӳртнĕ пулсан та, двигатель çук пирки çутă параймаççĕ. Вăрмарти элеваторта 18 лаша вăйлĕ двигатель ахалех ларать. Çавăнпа та çав двигателе Вăрмар поселокне çутатмалла тума, район центрĕнче благоустройство ĕçне йĕркелеме 35 пин тенкĕ пама ыйтатăп.

Эпĕ Пăртас больницине ремонтлама райсовет исполкомĕ 46 пин тенкĕ ыйтнине çирĕплетсе пама ыйтатăп.

Депутат юлташсем! Вăрмар районĕ бюджета пĕтĕмпех тултараймарĕ. Доход енĕпе 91,2 процент, расход енĕпе 90 процент çеç тултарнă. Ку пĕр енчен, районри финанс отдел заведующийĕ ĕçе çителĕклĕ ертсе пырайманнинчен те нумай килнĕ. Ана улăштарнăранпа ĕç чылай лайăхланни курăнчĕ.

Район финанс планне тултарас енĕпе çирĕмĕш вырăнта тăратчĕ, халĕ тăхăрмĕш вырăна кусрĕ.

1941 çулти бюджета ăнăçлăн пурнăçласшăн çине тăрса ĕçлер. Вăл бюджета эпир ытлашшипех пурнăçлăпăр, ăна пурнăçлас ĕçре пире коммунистсен парти, унăн çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пыни шанчăк пулса тăрать. (Алă çупаççĕ).

Улатăр райсовет исполком председателĕн Б. А. Вислобоков юлташăн сăмахĕ

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессинче пăхса тухма тата çирĕплетме Чăваш АССР Совнаркомĕ тăратнă Чăваш Автономлă Советлă Социализмлă Республикин 1941 çулти государство бюджечĕ чăваш халăхĕ малалла ӳссе чечекленсе пынине кăтартса парать.

Орденлă Чăваш республики ВКП(б) Центральный Комитечĕ, Совет правительстви тата Сталин юлташ хăй тăрăшнипе юлашки çулсенче промышленность тĕлĕшпе те, ялхуçалăхĕнче те, социальнă тата культура строительствинче те питĕ пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Улатăр районĕн примерĕ тăрăх эпĕ район тата хула бюджечĕ çулсеренех мĕнле ӳссе пынине кăтартса парассăн 1938 çулта Улатăр хулин бюджечĕ тăрăх 4218 пин тенкĕ доход илме пăхнă пулсан, 4.319,7 пин тенкĕ илнĕ, 102,4 процент тултарнă. Çак шутран чи пысăк пайĕ халăх сывлăхне сыхлас, халăха çутта кăларас тата хула хуçалăхне лайăхлатас ĕçе кайнă. 1940 çулта хула бюджечĕ 4.644,9 пин тенкĕ пулнă, кăçал 4.773,7 пин тенкĕ пăхнă, ку вăл 1938 çулпа танлаштарсан 13,1 процент ӳснине пĕлтерет. Район бюджечĕ те çакăн пекех ӳссе пырать.

Паровозсем юсакан завод, çулран çулах производство программине тултарманскер, Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессийĕ усăлнă тĕле 1941 çулти пĕрремĕш квартал планне 100,9 процент тултарчĕ. Гармоньсем тăвакан фабрика тата ытти предприятисем те плана тултарчĕç.

Финанс планне тултарас тĕлĕшпе Улатăр районĕ начар мар ĕçлерĕ. 1940 çулти финанс планне тултарнăшăн тата ытлашшипех тултарнăшăн пирĕн район куçса çӳрекен икĕ Хĕрлĕ Ялав илнĕ. Кăçалхи çулăн пĕрремĕш квартал планне район 108,5 процент тултарнă.

Депутат юлташсем! Иртнĕ çулта пирĕн республика чылай çитĕнӳсем турĕ Анчах та вĕсем сахал-ха. Наркоматсем лайăхрах ĕçленĕ пулсан пирĕн çитĕнӳсем тата ытларах пулмаллаччĕ. Анчах та хăшпĕр наркоматсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Эпĕ кунта Наркомлес ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен каласшăн. Вăрмапа усă курас тата фабрикăсемпе заводсем плана 1940 çулта 83,2 процент кăна тултарнă. Ку вăл Наркомлес начар ĕçленинчен, предприятисене куллен ертсе пыманнинчен килнĕ ĕнтĕ. Акă хăшпĕр фактсем: 1940 çул вĕçĕнче вăрман промышленноçĕнче ĕç вăйĕ те, инструментсем те çителĕксĕр пулчĕç. Çапла, Кирери механизациленĕ вăрман пунктĕнче пуртăсем 480 штука, напильниксем 6.000 штука, пуртă аврисем 1.700 штука çитмен. Тепĕр чухне çапла пулать: ытти облаççемпе крайсенчен инструментсем илсе килме тăрăшаççĕ, çав вăхăтрах вĕсем хăйсен склачĕсенче йăваланса выртаççĕ.

Наркомлес ĕçĕнчи çитменлĕхсене кăтартакан фактсем сахал мар. Наркомлесăн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле. Унăран вăрман промышленноçĕнче большевикла йĕркелĕх тума май çук.

Партипе правительство стройматериалсем тăвакан промышленность çине пысăк тимлĕх хураççĕ. Пирĕн районра стройматериалсен промышленноçне сарма майсем пур. Çавăнпа та эпĕ вăрман промышленноçне сарас тĕлĕшпе тĕпчев ĕçне тума. Кире поселокĕнче кирпĕч завочĕ тума 10 пин тенкĕ укçа хушса пама ыйтатăп.

Республикăн 1941 çулти бюджетне доход тата расход енĕпе те тултарасси пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Партин Центральный Комитечĕпе Совет правительстви тата Сталин юлташ ертсе пынипе 1941 çулти пĕтĕм ĕçсене ăнăçлăн туса пырăпăр. (Алă çупаççĕ).

Чăваш АССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарĕн П. В. Васильков юлташăн сăмахĕ

Депутат юлташсем! Чăваш АСС Республикин 1941 çулти государство бюджечĕ—сессинче пăхса тухса çирĕплетме тăратнă бюджет—халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслинче тунă çитĕнӳсене палăртса тăрать. Вăл бюджет пирĕн республикăн экономикине тата культурине малалла ӳстерсе пыма май парать.

Чăваш республикинчи вырăнти промышленность туса кăларакан продукци хисепĕ 1940 çулта, пĕтĕмĕшпе илсен, 12,4 процент ӳснĕ, куллен кирлĕ таварсен продукцийĕ, 1939 çултипе танлаштарсан, 54 процент ӳснĕ. 1940 çулта çăмăл промышленность та чылаях ӳсрĕ. Çавăн пекех, районсенчи промышленность та ӳссех пырать.

Апла пулсан та, вырăнти промышленность халăх хуçалăхĕн ытти отраслисенчен юлса пырать.

Вырăнти промышленноçăн тĕп çитменлĕхĕ вăл—капитальнăй строительство планĕсене яланах тултарайманни пулать. 1940 çулта капитальнăй строительство планне мĕнпурĕ те 60,6 процент çеç тултарнă. Чылай предприятисенче строительство ĕçĕ питĕ вăраха тăсăлса пырать. Сăмахран акă, Çĕрпӳ хулинчи примус горелкисен заводне 5-мĕш çул тăваççĕ ĕнтĕ. Улатăрти тӳмме мастерскойне 1940 çултах ĕçе ямалла пулнă, анчах ăна халĕ те ĕçе ярайман-ха.

1940 çулта 32 предприятирен 24-шне çеç ĕçе янă; ытти сене халĕ те туса çитереймен. Строительство енĕпе пĕр Куславкка райсовет исполкомĕ çеç аван ĕçлет.

Вырăнти промышленность юлса пыни пĕтĕмпех партин XVIII конференцийĕнче Маленков юлташ хăйĕн докладĕнче уçса панă сăлтавсенчен килет, урăхла каласан, Наркомместпром тата райсовет исполкомĕсем бюрократла ертсе пынинчен килет.

Ĕçсыннин депутачĕсен районсенчи тата хуласенчи Совечĕсен исполкомĕсем район промышленноçне сарса пырас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сăмахран, Первомайски тата Пăрачкав районĕсем вырăнти промышленность юлса пырассине пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Первомайски районра икĕ предприяти пур. Вĕсем района пăхăнса тăраççĕ. Икĕ предприятирен пĕри те хăйсен 1940 çулти планне тăрарман. Çавăн пекех, вĕсем 1941 çулта та юлса пыраççĕ. Полукиряри хăма çураканзавод кăçал, 1939 çулпа танлаштарсан, продукцине мĕнпурĕ те 39,6 процент çеç туса кăларнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ çĕнĕ предприятисем тăвас тата куллен кирлĕ таварсене ытларах туса кăларасси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси те çителĕксĕр пырать. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Хĕрлĕ Чутай районĕпе Шупашкар хули юлса пыраççĕ, вĕсем çĕнĕ предприятисем уçас тĕлĕшпе ĕçе халĕ те тытăнман.

1941 çулта пирĕн çĕнĕрен 31 предприяти тумалла тата районри промышленность предприятисене аслăлатса çĕнетмелле. Çаксене туни туса кăларакан продукци хисепне 2,6 хут ӳстерме май парать.

Вырăнти промышленноçа сарса пыма пирĕн пур майсем те çителĕклĕ. Сăмахран, Çĕмĕрле районне илер. Куптă халăха куллен кирлĕ таварсене туса кăларма кирлĕ условисем пурте çителĕклех. Райсовет исполкомĕ çине тăрса ĕçлени çеç кирлĕ.

Вырăнти промышленноçа сарса пырасси Наркомместпром тата районпа хула совет исполкомĕсем ку тĕлĕшпе хăйсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетнинчен килет. Вĕсем партин XVIII конференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртес çĕрте куллен пулăшса пымалла.

Район тата хула Совет исполкомĕсен çĕнĕ предприятисене тăвас тата кивисене аслăлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене хăвăртлатмалла, вырăнти промышленность ыйтăвĕпе кашни кунах ĕçлесе пымалла, вĕсен экономикине тĕплĕн пĕлсе, ĕçре пулăшса пымалла.

Депутат юлташсем! Вырăнти промышленность умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ тата СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе пырса, 1941 çулта вырăнти промышленноçа халăх хуçалăхĕн малта пыракан отраслисен ретне тăратмалла. Çакна тума пирĕн вăй çитет. Партипе Совет правительство тата Сталин юлташ вырăнти промышленноçа аталантарса пырассишĕн куллен тăрăшни ку тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать. (Алă çупаççĕ).

Е. И. Одинцов депутат сăмахĕ

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Верховный Совечĕн V Сессине пăхса тухма тăратнă Чăваш АССР 1941 çулти бюджечĕ государствăллă пысăк документ пулса тĕрать. Çав бюджетра доходсемпе расходсен источникĕсене тĕплĕн кăтартса панă. Чăваш АССР 1941 çулти бюджечĕ социализмлă промышленноçăн тата культурăн ӳсĕмĕсене, çавăн пекех ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пынине çакă та лайăх çирĕплетсе парать. 1940 çулта облаçри промышленноçĕн накопленийĕ 4.762,9 пин тенкĕ тата районри промышленность енĕпе—2204 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1941 çулта республикăри промышленноçăн накопленийĕ 8424 пин тенкĕ, районри промышленноçĕн накопленийĕ 3.338,5 пин тенкĕ таран ӳсмелле.

РСФСР Верховный Совечĕн тăваттăмĕш Сессийĕ пирĕн депутат Сомов ыйтăнăпе килĕшрĕ, хуласен благоустройствипа валли тата вырăнти строительство материалĕсене хатĕрлеме уçа ӳстерсе пама йышăнчĕ.

Эпĕ Чăваш АССР Верховный Совечĕн Сессине правительство 1941 çул валли тăратнă бюджета, Бюджет Комиссийĕн тӳрлетĕвĕсемпе тата хушăвĕсемпе пĕрле, çирĕплетме сĕнетĕп. Бюджет Комиссийĕ бюджетăн доходсемпе расходсен мĕнпур статьисене тĕплĕн пăхса тухнă.

1940 çулта топливо, апат-çимĕç тата вăрман промышленноçĕ хуçасăрлă пулнипе, ĕçукçи фончĕсене ытлашши расходланипе тата штрафсем тӳленипе 3806 пин тенкĕ тăвах курнă. Çакă вара продукцин хăйне ларакан хахне чакарма тата накопленисен планĕсене тултарма чăрмантарнă. Калас пулать, Топливо промышленноçăн тата Автотранспорт Управленийĕсем кăçал та начар ĕçлеççĕ, иртнĕ çулти йăнăшсене çапах тӳрлетмеççĕ-ха.

Топливо промышленноçăн Управленийĕ 1940 çулта вăрман туртгарнă çĕрте расценкăсене пăснă, пĕр фестметр туртгарнăшăн 50—52 тенкĕ тӳленĕ. Çакăн пек пулнипе ĕçукçи фондне 459,2 пин тенкĕ ытлашши расходланă. Автотранспорт Управленийĕ те иртнĕ çулта нормăсемпе расценкăсене пăсса ĕçленине пула 300 пин тенкĕ ытларах расходланă.

1941 çулта Топливо промышленноçĕн тата Автотранспорт Управленийĕсем тăрăх 2591 пин тенкĕ накопленипулмалла тата бюджетран 1.542,5 пин тенкĕ хывмалла.

Çаксене пурне те пурнăçа кĕртес тесен, Топливо промышленноçĕн Управленийĕн тата Автотранспорт Управленийĕсем тăрăх 2591 пин тенкĕ накопленипулмалла тата бюджетран 1.542,5 пин тенкĕ хывмалла.

Çаксене пурне те пурнăçа кĕртес тесен, Топливо промышленноçĕн Управленийĕн руководителĕсен халăх пурлăхĕ çине тиркевсĕр пăхассине пĕтермелле.

Республикăра предприятисене, организацисене, шкулсемпе больницăсене тата учрежденисене вутă, çавăн пекех стройматериалсем хатĕрлесе тăратас тĕлĕшпе «Чăвашлесзаг» тресчĕ тата Топливо промышленноçĕн Управленийĕ ĕçлеççĕ. Тĕрĕссипе илсен, вĕсен ĕçĕсем те пĕр евĕрлех: вăрман хатĕрлемелле, вырăнти организацисене вутă тата стройматериалсем туртгарса памалла. Вĕсен иккĕшĕн те плансем пысăк, анчах вĕсем вăрман хатĕрлемехли, çавнашкалах туртгармалли плансене тултараймаççĕ.

Асăннă организацисен хăйсен аппаратчĕсем пур. Аппаратсене тытса тăма çулталăк хушшинче 196,7 пин тенкĕ укçа расходлаççĕ. Ман шутпа «Чăвашлесзаг» трестне пĕтерсе, унăн ĕçне Топливо промышленноçĕн Управленийĕ çине хурсан, ĕçсем лайăхрах пулса пыма пултараççĕ.

1941 çулти бюджета Бюджет Комиссийĕнче пăхса тухни Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ лайăхрах ĕçленине палăртрĕ. Отчетлă тата планлă материалсен пахалăхĕ ӳснĕ, çынсем те ĕç техникине ĕлкĕхинчен аванрах пĕлекен пулчĕç. Апла пулсан та Бюджет Комиссийĕнче çакă палăрчĕ: Финанс Халăх Комиссариачĕ бюджета тултарас çĕрте финанс органĕнсен пултарулăхĕпе туллин усă курмасть.

1940 çулта финанс органĕнсем тĕрлĕрен налогсем çĕкленĕ çулран çулах 8.508,5 пин тенкĕ, вăл шутран единоличниксенчен 2.118,9 пин тенкĕ недоимкăна списать тунă. Çакă вăл пысăк çитменлĕх.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн виççĕмĕш Сессийĕнче Наркомфин наркоматсене декабрь уйăхĕн юлашки кунĕсенче тин укçа пани çинчен, çавна май Наркоматсем çав укçапа çĕнĕ çулччен усă курма пултарайманни çинчен кăтартса панăччĕ. Çак кăтартусенчен Наркомфин хăйне валли вывод тăвайман. 1940 çулта Наркоматсене çавăн пек йĕркепех укçа панă. Çавна пула вĕсем 868 пин тенкĕ укçапа усă курайман, тума палăртнă ĕçсене тăвайман.

Çак фактсем вĕсем Наркомфинăн лайăхрах ĕçлеме кирлине, 1941 çулти бюджета тултарассишĕн çине тăрса, тимлĕн ĕçлеме кирлине кăтартса параççĕ.

Депутат юлташсем! Пирĕн кашни работникăн, Чăваш АССР 1941 çулти бюджетне доходсем енĕпе те, расходсем енĕпе те пĕтĕмпех тултарассишĕн кĕрешмелле. Нимĕн иккĕленмелли те çук, 1941 çулти бюджета ăнăçлăн тултарăпăр. (Алă çупаççĕ).

В. И. Журавлева депутат сăмахĕ

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Государство бюджечĕ — Чăваш АССР Совнаркомĕ Верховный Совет сессине сӳтсе-явса çирĕплетме тăратнă бюджет—пирĕн социализм строительствинчи пысăк çитĕнӳсене кăтартса парать.

Сессире тухса каланă депутатсем Чăваш республикин правительстви тăратнă бюджета çирĕплетме сĕнчĕç, эпĕ вĕсемпе килĕштетĕп.

Пирĕн Шăмăршă районĕ, ытти районсем пекех, промышленность енĕпе те, çавăн пекех, ялхуçалăх енĕпе те пысăк çитĕнӳсем турĕ. 1928 çулта пирĕн район бюджечĕ 184.145 тенкĕ пулнă пулсан, 1941 çулта вăл 2.727,5 пин тенке çитрĕ. Çапла ĕнтĕ район бюджечĕ 12 çул хушшинче 15 хут таран ӳсрĕ.

Социально-культурнăй строительство енĕпе тăвакан ĕçсем район бюджетĕнче тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. 1941 çулта ку енĕпе 2.089 тенкĕ е 76,7 процент расходлама пăхса хунă.

Çак çитĕнӳсене пирĕн халăх Ленин-Сталин партийĕ ертсе пынипе, ЦК ВКП(б) тата Сталин юлташ хăй ертсе пынипе çеç тума пултарнă.

Депутат юлташсем! Эпĕ çыхăну ĕçĕ çинчен кĕскен чарăнса тăрасшăн. Чăваш республикинчи çыхăну управленийĕн почта отделĕ начар ĕçлет. Сыруссене Шупашкартан района вăхăтра çитермеççĕ, уйрăмах ку тĕлĕшпе Шăмăршă районĕ юлса пырать. Шăмăршă — инçетри район, çавăнпа ăна пулăшу ытларах кирлĕ.

Çыхăну тĕлĕшпе пирĕн район юлса пырать. Çапах та çыхăну управленийĕ пирĕн район çине сахал çаврăнса пыраççĕ. Çавăнпа та эпĕ çак çурта тума 25 пин тенкĕ, райархива йĕркелеме 5 пин тенкĕ ыйтатăп.

Депутат юлташсем! Чăваш АССР бюджетне пурнăçа кĕртессине шансах тăмалла. Бюджета пурнăçа кĕртмеллĕ тĕп услови Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыни пулса тăрать.

Чăваш халăхĕ коммунистсен партийĕ, аслă çулпуç тата учитель Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм патне пырас çул çинче татах çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассине шансах тăмалла! (Алă çупаççĕ).

Бюджет пирки хамăр ыйтусем çинче чарăнса тăрас тетĕп.

1940 çулта Палтиелĕнче вăтам шкул çуртне тума тытăннă. Строительство пĕтмен-ха, ăна туса çитерме тата 35 пин тенкĕ кирлĕ. Верховный Советран çак шкул çуртне туса çитерме кирлĕ

тараи укçа уйăрса пама ыйтатăп. Çавăн пекех тата районри больницăна пысăклатса аслăлатма 20 пин тенкĕ кирлĕ. Чăваш АССР Верховный Советĕнчен çакна валли те укçа уйăрса пама ыйтатăп.

Шăмăршă районне 1927 çултах организацилеме пулсан та, пирĕн районра Колхозник çурчĕ халĕ те çук. Вăл çурта тăвассине çулран çулах хăварса пыраççĕ. Çавăнпа та эпĕ çак çурта тума 25 пин тенкĕ, райархива йĕркелеме 5 пин тенкĕ ыйтатăп.

Депутат юлташсем! Чăваш АССР бюджетне пурнăçа кĕртессине шансах тăмалла. Бюджета пурнăçа кĕртмеллĕ тĕп услови Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыни пулса тăрать.

Чăваш халăхĕ коммунистсен партийĕ, аслă çулпуç тата учитель Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм патне пырас çул çинче татах çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассине шансах тăмалла! (Алă çупаççĕ).

САМАХСЕМ КЕСКЕТЕЕ СТЕНОГРАММА ТАРАХ ПИЧЕТЛЕНЕÇÇЕ.

Чăваш АССР I-мĕш созыври Верховный Совечĕн V Сессийĕ

Е. Д. Дмитриева депутат сăмахĕ

Депутат юлташсем! ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн историллĕ решенийĕсемпе хĕпăшалланнă совет халăхĕ хуçалăх тата культура строительствинче çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвать.

Чăваш республикин 1941 çулти бюджечĕ тăрăх халăх хуçалăхне малалла аталантарма 32.509,8 пин тенкĕ укçа хывма палăртнă. Кунсăр пуçне халăха вĕрентес ĕçе 77.020 пин тенкĕ, халăх сывлăхне сыхлас ĕçе 29.730,7 пин тенкĕ расходламалла.

Социалла-культурăллă ĕçсем валли çакăн пек нумай укçа-тенкĕ хывасси социализм çĕнтернĕ çĕршывра кăна пулма пултарать. Красноармейски районне илсе пăхар. Октябрьти революциччен район территорине пуçламĕш шкулсем пурĕ те 11 кăна пулнă. Халĕ йăлтах урăхла. Районра пуçламĕш шкулсем 20, туллимар вăтам шкулсем 10 тата вăтам шкулсем 4 пур.

Пирĕн республика культура строительствинче пысăк çитĕнӳсем тунă пулсан та, çитменлĕхсем те сахал мар. Пирĕн районра тивĕçлĕ образовани илнĕ учительсем çитмеççĕ. Аттестаци комиссийĕ витĕр тухманнисем 70 çын шутланаççĕ, вĕсенчен 35 çын вăтам шкултан та вĕренсе тухман.

Учительски институт кадрсене çителĕксĕр вĕрентсе хатĕрлет. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те тивĕçлипе ĕçлемест. Çапла, пирĕн района учительски институтран вĕренсе тухнă çынна янă, вăл методикăна та, педагогикăна та пĕлмест. Политпросвет учрежденисенче ĕçлекенсен кадрĕсене хатĕрлесси татах та начар вара. Пирĕн районра политпросвет ĕçĕнче 27 çын ĕçлеççĕ пулсан, 20-шĕн вăтам образовани çук.

Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн çитменлĕхĕсем çинчен те каламасăр иртме çук. Наркомздрав работникĕсем хăйсен ĕçĕ çине ответсăр пăхнине кăтартакан фактсем сахал мар. Çапла, пирĕн районри сывлăха сыхлав пайĕ пĕр ыйту тăрăх Наркомздравран темиçе хутчен те васкавлă пулăшу ыйтрĕ, анчах эпир ăна илеймерĕмĕр.

Районри больницăсен кирлĕ япаласем çитмеççĕ. Районри сывлăх пайĕ финанс пайĕ укçа-тенкĕ çителĕксĕр пăрать тесе ӳпкелешет, Наркомздрав та больницăсем çине сахал çăвăрăнса пăхать.

Бюджет пирки пĕр-ик сăмах калас килет. Чи малтан Мăн Шетмĕри вăтам шкул çинчен. Ку шкула 1940 çулта уçнă, халĕ унта 278 ача вĕренет, 1941—1942 çулти вĕренӳ çулĕнче 364 ача вĕренмелле. Анчах та паянхи куна шкулăн хăйĕн пĕр класс та çук. Классем уйрăм çуртсенче вырнаçнă. Кунта çĕнĕ çурт тумалла. Совнарком çак строительствăна плана кĕртме Наркомфина

тата Госплана хушнăччĕ. Анчах та ăна халĕ те пурнăçа кĕртмен. Çак шкул çуртне тăвассине 1941 çулти плаха кĕртме ыйтатпăр.

Иккĕмĕш ыйту—вăл район центрĕнче клуб тăвас ыйту. Ку ыйту 1937 çултанпа чăсăлса пырать. 1937 çулта клуб тума плана та кĕртнĕ пулнă, анчах укçине çулталăк пĕтнĕ чухне кăна панă пирки, унпа усă курма май килмен.

Красноармейски района 1935 çулта тунă. Çак вăхăт хушшинче район центрĕ культурăллă центр пулса тăчĕ. Учрежденисем валли çĕнĕ çуртсем нумай тунă, халăх шучĕ нумай ӳсрĕ. Клуб халь ялсовет исполком çуртĕнче кăна, тĕрлĕ канашлусем, пухусем иртternĕ чухне чăрмавсем нумай тĕл пулаççĕ. Савăнпа та клуб тума 95 пин тенкĕ укçа пама ыйтатăп.

Депутат юлташсем, эпĕ Совнарком тăратнă бюджета ĕнтĕлле сĕнетĕп.

Çак бюджета пурнăçа кĕртес ĕçре ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсене пăхăнса ĕçлени тĕп вырăнта тăрать. Нимĕн иккĕленмелли те çук, коммунистсен партийĕ, пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ ертсе пынипе эпир бюджета ăнăçлă тултарса, республика хуçалăхне малалла ярас ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тăватпăр. **(Алă çупаççĕ).**

Чăваш АССР 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн V Сессийĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Сесси ларăвĕ. Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсенче

Докладчик çитменлĕхсем çинчен калаглаçĕ

— Отчетпа суйлав пухуне уçмалла пулать пулĕ,—терĕ пуçламĕш парторганизацин секретарĕ.

— Уçмалла, анчах Ермолаев килсе çитеймен ха,—илтĕнчĕ сасă. Секретарь Ермолаева, шырама тухса кайрĕ, ыттисем кĕтсе ларчĕç...

Сĕнтĕрвăрри машинно-тракторнăй станцинчи пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ çапла пуçланчĕ.

Пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсем çинчен Закамский юлташ доклад туса пачĕ. Калас пулать, пĕр сехет хушши калăнă докладра Закамский юлташ пуçламĕш парторганизацин ĕçĕсене, унăн çитменлĕхĕсене, коммунистсем производствăра мĕнле ĕçленине, парти историне мĕнле вĕреннине тĕплĕн кăтартса параймарĕ. Докладчик уйрăм коммунистсем тата МТС дирекцин ĕçне критикламе хăяймарĕ.

Машинно-тракторнăй станци иртнĕ çулта начар ĕçлерĕ. Тракторсене тата ытти машинăсене юсас тĕлĕшпе кая юлса пынă. Тракторсемпе комбайнсене тата ытти машинăсене юсас тĕлĕшпе 43 пин тенкĕ укçа ытлашши расходланă. МТС иртнĕ çулта тракторсемпе ĕçлемелли плана 57 процент кăна тултарнă. Çав вăхăтрах горючи ытлашши расходланă.

МТС директорĕ Быков юлташ машинно-тракторнăй станцине начар ертсе пырать. Çуракăн сывхарса килет, анчах МТС суракине тухма хатĕр мар, тракторсене юсаса çитермен, тата вунă трактор юсамалла. Механиксем тракторсене юсас тĕлĕшпе хăйсем те начар ĕçлеççĕ.

Иртнĕ кĕркунне юсанă тракторсен уйрăм пайĕсем çуккине палăртнă. Хаклă ăшшăн машинăсене кунта питĕ япăх пăхса усраççĕ. Анчах çак çитменлĕхсем çинчен докладчик асăнмасăрах хăварчĕ.

— Парти историне миçе çын вĕренет?—тесе панă ыйту çине тивĕçлĕ ответ параймарĕ. Докладчик калаçă тăрăх, коммунистсем парти историне вĕренеççĕ, хăшĕрисем вуласа тухнă. Пренире тухса калакансем уйрăм коммунистсем парти историне начар вĕреннине, çак ĕçре пуçламĕш парторганизаци коммунистсене кирлĕ пулăшу паманнине палла турĕç.

МТС директорĕ Быков юлташ пренире чи малтан тухса каларĕ. Анчах вăл МТС çитменлĕхĕсене тата вĕсем мĕншĕн пулса пыннине большевикла тимлĕхпе каласа памарĕ. Вăл çитменлĕхсем çинчен калама кирлĕ пулнă. Машинно-тракторнăй станцинче работниксене ĕç укçи тӳлес ĕçре тĕрĕсмарлăхсем нумай 1941 çулпăн смета тăрăх администрацине хуçалăх расхочĕсем валли пăхнă укçана пĕрремĕш кварталтах расходласа пĕтернĕ.

Пренире тухса калакансем пуçламĕш парторганизацине директи ĕçне вăйлăн критиклерĕç. Вĕсем парторганизацин XVIII партконференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырас, производство ыйтăвĕсемпе тата çамрак коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе çитĕлĕксĕр ĕçленине палла турĕç.

Коммунистсем отчетпа суйлав пухăвĕнче паха сĕнӳсем пачĕç, парторганизацин секретарне çав сĕнӳсене пурнăçа кĕртсе пыма çине тăрса ĕçлеме кирли çинчен асăрхаттарчĕç.

Отчетпа суйлав пухăвĕ тивĕçлĕ решени ыйтăнчĕ, пуçламĕш парторганизацин секретарĕ пулса ĕçлеме Закамский юлташа суйларĕ.

М. ЯДРОВ.

Манма юраман ĕçсем

КАЛИНИНО. Апрелĕн 11-мĕшĕнче Шĕнерти территориллĕ пуçламĕш парторганизацин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура парторганизацин секретарĕ И. Н. Логинов юлташ парторганизаци ĕçĕсем çинчен отчет туса пачĕ.

Шĕнерти пуçламĕш парторганизаци отчетлă тапхăрта чылай çитĕнӳсем тунă. ВКП(б) членĕ Н. Самонов юлташ ертсе пыракан «Красноармеец» колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче пысăк тупăшлă тырпул туса илнĕ. Колхоз кăçалли çуракине те хатĕр. Государство умĕнчи парăмсене вăхăтрах парса пынă.

ВКП(б) кандидачĕ М. А. Андреев юлташ заведующи пулса ĕçлекен Чăрăш Шĕнерти пуçламĕш шкул та юлташи вăхăтра хăйĕн ĕçне лайăхлатнă.

М. Андреев юлташ комсомол комитечĕн секретарĕ пулса ĕçлет. Вăл ертсе пыракан организацинчи комсомолецсем — пурте колхоз производствинчи стахановецсем, ударниксем.

Пренире тухса калакан коммунистсем парторганизаци ĕçĕнчи чылай çитменлĕхсене палăртрĕç. Сăмахран, акă, Шĕнерти «1-ое мая» колхозри пуçламĕш комсомол организацине çитменлĕхсем чылай пулнă. Ку организацине ВКП(б) кандидачĕ А. Краснова юлташ ертсе пынă. Политикăллă воспитани ĕçĕ янăх пулнă пирки комсомолецсенчен хăшĕпĕрисем хулиганла ĕçсем тунисем тата ĕç дисциплинине пăснисем пулнă.

Парторганизаци территорине инвалидсен промысла артелĕ пур. Артель хăйĕн производство планне кварталтан кварталах тултарса пыраймасть. Колхозниксенчен пухнă тирсене çĕртсе пĕтернĕ. Парторганизаци артельри ĕçе йĕркеleме тăрăшман.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Историллĕ библиотекăри çĕнĕ материалсем

Юлашки вăхăтра Государствăн историллĕ публичнăй библиотеки марксизм-ленинизм классикĕсем çырнă произведенисен пирвайхи изданийĕсен коллекцийĕ валли хаклă материалсем тупнă. Ленин çырнă «Развитие капитализма в России» кĕнекен (1899 çулта Петербургра каларнă) тата «Материализм и эмпириокритицизм» (1909 çулта каларнă) кĕнекен пĕрремĕш изданийĕсене тупнă.

1913 çулта большевикла «Просвещение» журналăн 3—5-мĕш номерĕсенче Сталин юлташăн «Национальный вопрос и социал-демократия» ятлă статьи пичетленсе тухнă. 1914 çулта Петербургра çак статьяна «Национальный вопрос и марксизм» ят парса, уйрăм статья туса каларнă. Хальхи вăхăтра çак издание Историллĕ библиотека валли илнĕ.

ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ

ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕМПЕ ÇЫХĂНУ ÇУК ПИРКИ

Куславкка тата Çĕрпӳ районĕсенчи пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе коммунистсенчен:—«Сире хăвăр районти хаçат кăмăла каять-и, вăл сире вырăнсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатма, пĕр-пĕрин опычĕпе палăшма пулăшать-и?» — тесе ыйтасчĕ.

Пĕр иккĕленмелли те çук, çĕлте асăннă районсенчи пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе коммунистсем тӳрех: — «Пирĕн районсенчи хаçатсем парторганизацисемпе уйрăм коммунистсен предприятисенчи, колхозсенчи, совет учрежденийĕсенчи, шкулсенчи творчествăллă ĕçĕсене çутатмаççĕ, пирĕнпе сыхăну тытмаççĕ»—тесе калама пултараççĕ.

Çак икĕ хаçатăн парти пурнăçĕ тенĕ отдел çук. Ку хаçатсем тăрăх асăннă районсенчи парторганизацисен ĕçĕсене курма май килмест. Куславкка районĕнчи «Ленин ялавĕпе» хаçат кăçал апрелĕн 6-мĕшне çитиччен 26 номер тухнă, çак шутран 16 номерĕнче парти пурнăçĕ çинчен пĕр статья та çук. Хаçат драмкружоксем, хор кружокĕсем мĕнле ĕçленни, чăхсем çăмарта тума пуçлани, уя тислĕк кăларни, юр тытни, библиотекăсем ĕçлемелли çинчен пĕрмаях çырать. Анчах парти организацисен ĕçĕсем çинчен коммунистсен районри пухăвĕсем, райком пленумĕсем пулнă хыççăн çеç хроникăллă статьясем çырать.

Районри предприятисемпе колхозсенче, учрежденисенче пуçламĕш парторганизацисен шучĕ 20-рен иртет. Çак организацисен ĕçне пĕрре те тĕплĕн çутатса памасть. Комбинатри пуçламĕш парторганизацин ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленни çинчен те «Ленин ялавĕпе» хаçатра курма çук. Совет учрежденийĕсенчи, колхозсенчи парторганизацисен ĕçĕсене çутатасси çинчен редакци пĕтĕмпех маннă. Паллах, çак пысăк çитменлĕх вăл хаçат партиллĕ массăпа сыхăну тытманнинчен, пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе коммунистсене хаçат ĕçне хутшăнтарманнинчен килет.

Çĕрпӳ районĕнчи «Сталинец» хаçатăн 1941 çулта тухнă номерĕсенче те Çĕрпӳри машинно-тракторнăй станцинчи, Уполнаркомзагри, хула Совечĕн исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизацисен, Патăрьелĕнчи, Анат Кипеçĕри, Тутăрла Кăнашри, Тивĕшри кандидатсен групписен ĕçĕсем çинчен çырнине курма çук.

«Сталинец» хаçат коммунистсен районри пухăвĕн ĕçĕсем çинчен те тĕплĕн çутатма тăрăшмасть. «Пуху пулса иртрĕ, 1940 çулхи итогсене сӳтсе-явăрĕ, 1941 çулхи задачăсене калăртрĕ» тесе çырнипех иртсе каять.

Асăннă икĕ хаçатăн та парти пурнăçĕн тематики хĕсĕк. Вĕсем парти пурнăçĕ çинчен çырмалли ыйтусене коммунистсен районсенчи пухăвĕсенче, ВКП(б) райкомĕн пленумĕсенче кăна кураççĕ. Вĕсем пуринчен ытларах редакцине çăмăлăн, хăй тĕллĕн килекен материалсене: колхозсем юр тытни, уя тислĕк кăларни, вулав çурчĕ ĕçлемелли çинчен çырнă т. ыт. çавăнпалах материалсене пичетленипех лăплантма юратаççĕ. «Сталинец» хаçат кунпа та çырлахмасть, республикăри хаçатсенче пичетленсе тухакан консультацилле, теорилле пур статьясене те пичетлеме тăрăшать. Паллах ĕнтĕ, хăшĕпĕр материалсене пичетлесси районти парти организацин ĕçĕсене кăтартакан материалсем организацилессинчен çăмăлрах.

Парти пурнăçне тĕплĕн çутатас пулсан, пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсемпе, пропагандистсемпе, агитаторсемпе, рядовой коммунистсемпе ытларах сыхăну тытас пулать, вĕсене хаçат ĕçне активлăн хутшăнма, тепĕр чухне статья, заметка çырма та вĕрентмелле. Çакăн пек тусан çеç хаçатсем парторганизацисен лайăх ĕçĕсене кăтартма, çитменлĕхсене вăхăтра критиклеме, партиллĕ-политикăллă пĕтĕм ĕçе лайăхлатас ĕçре ВКП(б) райкомĕсене çителĕклĕ пулăшма пултараççĕ.

Халĕ парти пуçламĕш организацисен ертсе пыракан органĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсем пыраççĕ. Парти органĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсем парторганизацисемпе редакцисем хушшинчи ĕçлĕ сыхăнăва çирĕплетме, коммунистсене пичет ĕçне активлăн хутшăнтарма питĕ лайăх май туса парать. Хаçатсем, парторганĕсен отчетпа суйлав пухăвĕсем мĕнле иртнине тĕплĕн те туллин çутатса, районти парторганизацисем, коммунистсем ВКП(б) XVIII съезчĕн тата XVIII партконференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн мĕнле кĕрешнине кăтартмалла.

Çак пысăк ĕçре, парторганĕсен отчетпа суйлавсем пынă вăхăтра редакцисемпе парторганизацисем хушшинчи сыхăнăва çирĕплетме хаçат редакцисен коллективĕсене парти райкомĕсем те нумай пулăшас пулать.

Парти райкомĕн черетлĕ пленумĕ

УЛАТАР. ВКП(б) райкомĕн черетлĕ пленумĕ парти Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕн итогĕсем тата пуçламĕш парторганизацисенчи парторганĕсен отчетпа суйлавĕсем çинчен сӳтсе-явăрĕ.

Артельсем 1941 çулти пĕрремĕш квартал планне 101 процент тултарнă пулсан та, куллен кирлĕ таварсене çителĕклĕ туса каларайман. «Красный кустарь» артель куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли плана 45 процент ытларах кăна тултарнă.

Районра промкомбинат тумалла пулнă. Анчах райсовет тата хула Совет исполкомĕсем пĕрремĕш квартала нимĕн те тумарĕç, вăхăта шавласах иртерчĕç.

Çаксемпе пĕрлех тĕрлĕрен учрежденисенче самăртма выльăхсем туянас ĕç те япăх тăрать. Нихăш организацин те выльăхсем туянмалли плана тултарман.

Пренире тухса калакансем районра куллен кирлĕ таварсене çителĕклĕ таранах туса кăларма пысăк условисем пуррине кăтартса пачĕç. Кунта вăрман тата промышленность отхочĕсем нумай. Куллен кирлĕ таварсене йĕркеллĕ кăларса тăрас тесен çине тăрса, тимлĕн ĕçлени кирлĕ тата сахалтарах каласмалла.

Пленум пуçламĕш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсене ăнăçлăн иртерме, парторганизацисен секретарĕсем пулса ĕçлеме пултарулăх сынсеме суйлама кирли çине кăтартса пачĕ.

П. БИРЮКОВ.

Лена шывĕ çинче рабочисене персе пăрахни

Инçетри тайгари Лена шывĕ çинчи рабочисен паттăр кĕрешĕвĕ рабочисен революциллĕ движенин историне, большевикла парти историне нихçан манми çутă страница пулса кĕчĕ.

29 çул каярах—1912 çулти апрелĕн 17(4)-мĕшĕнче—Лена шывĕ çинчи ылттăн кăларакан вырăнта патша самодержавийĕ, капиталистсене юрас шутпа, стачка вăхăтĕнче, администрацине каласса татăлма каякан рабочисен мирлĕ ушкăнне персе пăрахнă.

Хĕçпăшалсăр рабочисене персе пăрахнине хирĕç пĕтĕм Россейри рабочи класс çĕкленсе, тăваллăн протестленĕ.

Сталин юлташ, 1905 çулти революци поражени тӳснĕ хыççăн пулса тăнă реакци тапхăрĕнчи ĕнерхи çăлкуç революцие тепĕр хут сарăлса кайрĕ, 1917 çулти февральти буржуалла-демократиллĕ революци хыççăн Октябрьти социализмлă аслă революци çĕнтерчĕ. Рабочи класс влаçа хăйĕн аллине илсе, тĕнчере чи пирвайхи социализмлă государствăна—рабочисемпе хресченсен государствине туса хучĕ; кунта çынна çын эксплоатацилессине пĕтернĕ, çак эксплоатацине çуратакан çăлтăрсене—производство хатĕрĕсемпе средствисен уйрăм харпăрлăхне, эксплоататорсен класĕсене пĕтерсе хунă.

Социализм çĕршывĕнчи ĕççыннисем Сталин юлташ 1927 çулта Лена çинчи рабочисене саламласа çырнă сăмахсене асра тытаççĕ: «Бодайбори рабочисен юнĕн пĕр тумламĕ те сая каймарĕ, мĕншĕн тесен пролетариат тăшманĕсене тивĕçлипе тавăрнă, пролетариат ĕнтĕ вĕсене çĕнтернĕ. Халĕ, патшапа капиталистсен пусмăрĕнчен ирĕклĕ пулса, эсир Витим çыранĕсенче, харамлырсене пуйтарма мар, хамăрăн тĕнчери пирвайхи рабочи государствăна çирĕплетме ылттăн тупма пултаратăр. Рабочи класс çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешсе вилнисене хисеп те мухтав!».

В. СЛУЦКАЯ.

Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă пакт пирки ютçĕршывсенчи хаçатсем мĕн çыраççĕ

ЯПОНИЯ

ТОКИО, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă пакт Японири хаçатсенче паян та тĕп вырăн йышăнса тăрать. Пур хаçатсем та пакт çинчен статьясем тата умстатьясем пичетлесе кăлараççĕ.

«Мияко» хаçат, пакт тунипе саламласа, умстатьяра çапла çырать: «Пакт икĕ çĕршыв хушшинчи отношенисенче çĕнĕ самана пуçласа ярать. Çак пакта тунипе икĕ çĕршыв хушшинчи отношенисем йĕркеленсе каяççĕ, вĕсем иккĕшĕ те пĕртанах тĕнчери йывăр обстановкăпа тĕл пулчĕç. Эпир пакта пĕтĕм чĕререн саламлатпăр».

Хаçат Совет Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисен мĕнпур проблемисене йĕркелесе яма пулăшасса шанса тăни çинчен калать. «Çак пакт никĕсĕ çинче малашне икĕ çĕршыв хушшинче йĕркеллĕ отношенисем аталанса пыччăр тата çак отношенисем туслăх туйăмĕсемпе пĕр-пĕрне шанса тăни çинче çирĕпленсе пыччăр, теме кăна пултаратпăр».

«Цюгай сиогно» хаçат: çак пакт икĕ çĕршывĕшĕн те историллĕ вырăн йышăнса тăрать, тесе çырать. Пакта тунă чухне, тет хаçат, ССР Союзĕ хальхи вăрçăра хăй тытса пыракан çирĕп нейтралитет принципĕсене шута илнĕ.

«Хоци» хаçат çапла çырать: «Японипе Совет Союзĕ хушшинче нейтралитет çинчен тунă пактăн тĕллевĕ икĕ çĕршыв хушшинче мирлĕ тата туслă отношенисем тытса пырасси пулса тăрать».

ГЕРМАНИЯ

БЕРЛИН, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен пакт тунă пирки Германири информаци бюровĕ панă пĕлтерĕве паян пур хаçатсем те лайăх куракан вырăнта пичетлесе кăларнă.

Германири информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: «ССР Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă пакта Германири хаçатсем, пĕтĕмĕшлĕ мире йĕркелесе ярас ĕçе хунă хаклă вклад, тесе хаклаççĕ».

«Фелькишер беобахтер» хаçат пакт туни çинчен калакан пĕлтерĕве: «Мускавра Японипе ССР Союзĕ хушшинче нейтралитет çинчен пакт тунă» текен пысăк заголовокпа пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳре пакт тунă пирки Япони премьер-министрĕ Коноэ пичетлесе кăларнă заявленине илсе кăтартнă. Пакт пирки çырса кăларнă статьяра «Фелькишер беобахтер» хаçат: ССР Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисем «халĕ ĕнтĕ çĕрелĕ никĕс çинче çирĕпленсе тăраççĕ», тесе çырать.

«Берлинер берзенцейтунг» хаçат çапла çырать: Мускавпа Токио хушшинчи отношенисене йĕркелесе янине «Германи тивĕçлипе хаклать».

«Дейче дипломатиш политише корреспонденц» бюллетень çапла палăртăвать: Совет Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисене тĕкĕмлетсе тăнă проблемăсем нумай çулсем хушши тытăнса тăчĕç. Хальхи вăхăтра çав тавлашуллă проблемăсене сирсе пăрахнă. Событисем çакнашкал аталанса пынине Германия саламлама кăна пултарать.

МЕКСИКА

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен пакт тунă çинчен тĕплĕн калакан пĕлтерӳсене Мексикăри хаçатсем лайăх куракан вырăнта пичетлесе тăларнă.

ФРАНЦИЯ

БОРДО, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Офи (Гавас) агентствин дипломатиллĕ обозревателĕ Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен пакт тунă пирки çапла çырать: çак пакт ăна тунă икĕ çĕршывĕшĕн те историллĕ вырăн йышăнакан паха документ пулса тăрать. Пакта тунипе, тесе çырать обозреватель, ССР Союзĕпе Япони хушшинчи йывăр отношенисен тапхăрĕ пĕтет.

Офи (Гавас) агентстви «Правда» хаçат пакт туни çинчен çырса кăларнă умстатья содержанине панă.

ИТАЛИЯ

РИМ, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). ССР Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă пактăн текстне Италири пур хаçатсем те пĕтĕмĕшпех пичетлесе кăларнă.

«Трибуна» хаçат çапла çырать: çак пакта туни çинчен ютçĕршывсенчи хаçатсем çыракан статьясенче политикăллă çак событи пысăк вырăн йышăнса тăнине палла тăваççĕ. Пакта туни, тесе çырать «Пополо ди'Рома» хаçат, мир политики енчен пăхсан уйăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Японипе Совет Союзĕ хушшинче тунă пакт икĕ çĕршывне те туслăн ĕçлесе пурăнма май парать, вĕсем хушшинче пулнă тăшманла отношенисене сирсе ярать.

ШВЕЦИЯ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен пакт тунă пирки Швецири хаçатсем нумай çыраççĕ. Паян ирхинехи пур хаçатсем те пактпа декларацин текстĕсене пĕтĕмĕшпех пичетлесе кăларнă, çавăн пекех тата пакт çинчен «Правда» çырса кăларнă умстатья содержанийĕ çинчен каласа панă. «Стокгольмс тиднинген» хаçат хăйĕн умстатьинче: нейтралитет çинчен тунă пакт ăна алă пусса çирĕплетнĕ икĕ çĕршывĕшĕн те пысăк усă кӳрекен документ пулса тăрать, тесе çырать.

ГРЕЦИЯ

АФИНЫ, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). ССР Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă пакт содержанине пур хаçатсем те пичетлесе кăларнă.

БОЛГАРИЯ

СОФИЯ, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Болгарире ĕнер ирхине тухнă пур хаçатсем те Совет Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă пактăн тата декларацин текстĕсене пĕрремĕш страницăсенче пичетлесе кăларнă. Çак документсене хаçатсем «Историллĕ çĕнĕ документ» текен пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăлараççĕ. «Зора» хаçат пакт пирки çапла çырать: «халиччен тунă мĕнпур пактсене тунă чухне ССР Союзĕн пĕр шухăш—совет халăхĕпе ытти халăхсем валли мирлĕ пурнăç тăвас тата вăрçăна сарăлса çывăхленсе пыма чăрмантарас шухăш пулнă. Совет Союзĕ çавăн пек пактсене малашне те тума хатĕр тăрать».

АНГЛИЯ

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). ССР Союзĕпе Япони хушшинче нейтралитет çинчен тунă пакт пирки Англири хаçатсем халĕ те нумай çыраççĕ.

Англири информаци министерстви çапла пĕлтерет: çак пакт Совет Союзĕ хăйне уйăм позици тытса пынине, ССР Союзĕпе Япони пĕр-пĕринпе ырă кӳршĕллĕ отношенисем тытса тăни кирлĕ тесе йышăннине татах та тепĕр хут кăтартса парать, тесе çыраççĕ Англири хаçатсем.

Колхозсенчи транспорт инвентарĕсĕм пирки

СĔРПУ. (**Хамăр корр.**). Иртнĕ çулта уйăм колхозсем урапа тата кӳлмелле ытти тавраçсем çитменнипе хытă аптранăччĕ. Транспорт инвентарĕсем çитменнине пула кĕлте турттарас, государствăна тырпул тăратас, вут-шанкă кӳрсе хатĕрлес тата ытти ĕçсем те кая юлса пынă. Пĕр сăмахпа каласан, транспорт инвентарĕсем çитменни хытах кансĕрленĕ.

Иртнĕ çулта пулнă опытсенчен районра мĕнле те пулин вывод туни-ха? Чăн та, çак ыйтăва юлашки вăхăтра районра пухăнакан канашлусенче те час-часах тапратма тытăнчĕç. ВКП(б) райкомĕн бюровĕнче тата район Совет исполкомĕн президиумĕнче те транспорт инвентарĕсен ыйтăвĕсем çинчен сӳтсе-явнă. Районри организацисем ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме колхозсене «татăклă» кăтартусем панă. Колхозсем те «тивĕçлĕ» мерăсем йышăнма пулса, «татăклă» обязательствăсем илнĕ.

Çапла вара, çиелтен илсе пăхсан, транспорт инвентарĕсене йĕркене кĕртес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ теме çук. Анчах, çапах та, чылай колхозсем транспорт хуçалăхĕ начар пирки аптраса тăраççĕ. Лапра Кушкă ялсоветĕнчи «Родина» колхоз счетоводчĕ Федоров юлташ пĕлтернĕ тăрăх, вĕсен колхозĕнче кӳлмелли тавраçсем пурте йĕркеллĕ. Тăплĕнрех пăхса тухатăн та, ĕç начар тăнине лайăх туйса илетĕн. Ĕç лашисем 27 шутланаççĕ. Иртнĕ çулта вĕсене кӳлме 18 урапа пулнă. Анчах колхоз килхартинче халь пĕр урапа та çук. Федоров юлташ каланă тăрăх, урапасене юсама колхозниксене валеçсе панă.

Колхозăн кăçал 2 рыдван тумалла пулнă, халĕ пĕрре те туман. Кӳлмелли ытти тавраçсем пирки те ĕç мухтамаллах тăмасть. Хăмăтсене пĕр енне сӳрсен явса тунă пăяв, тепĕр енне чĕн пăяв тăхăнтартса лартнă. Хăмăт кĕççисем хытса ларнă, покрышкисем ванса пĕтнĕ.

Ку ялсоветри «Совет» колхоза та тилхепе-йĕвен, урапа-çуна тавраçсене «лартма вырăн çук», вĕсене колхозниксем патĕнче усраççĕ.

Районри çĕрĕç пайĕ нумаях та пулмасть 78 колхоз тăрăх транспорт инвентарĕсем тĕлĕшпе сведенисем пухрĕ. Çак колхозсем тăрăх илсен, районра 661 лашана кӳлме урапа çитмест. Икĕмĕш Вăрманкас ялсоветĕнчи «Камай» колхозăн 39 лашана кӳлсе тухма 25 урапа, 30 хăмăт, 30 ĕнерчĕк пур. Пĕкĕрвар ялсоветĕнчи колхозсенче ĕç кунтинчен те начартарах тăрать. «Шурăмпуç» колхоза илсе пăхар. Ĕç лашисем 48 пуç. Урапасем 15 çеç. «Словаш» колхозăн 26 ĕç лашине кӳлсе тухма 10 урапа, 18 хăмăт, «Моряк» колхозăн 30 ĕç лашине пуçне 10 урапа, 20 хăмăт пур.

Кун пек тĕслĕхсене татах та илсе кăтартма пулать. Хăшпĕр колхозсенче 2—3 лаша пуçне пĕр урапа, 3—4 лаша пуçне пĕр комплект кӳлмелли тавраш тивет. Сăмахран, Шуртавăшри «Этна» колхозра 70 ĕç лашине валли мĕнпурĕ те 28 урапа çеç.

Ялыуçалăх ĕçĕсенче чĕрĕ туртăм вăйă — лаша вăйă пысăк вырăн йышăнса тăрать. Лаша вăйăне кирлĕ пек усă курасси транспорт инвентарĕсем çителĕклĕ пурринчен килет. Хăшпĕр колхозсенче çакна ăнланса ĕçлемеççĕ. Чылай колхозсенче урапа-çуна тавраш-ĕсене лартма ятарласа тунă сарайсем çук.

Колхозсем вăйланса пыраççĕ. Кӳлсе тухма тарантас тата илемлĕ хăмăтĕнерчĕксем туянма вăхăт ĕнтĕ. Чылай колхозсенче çакна курма çук-ха. Эпир асăннă «Родина» колхозăн малтанхи вăхăтра тарантас пулнă, йĕркеллĕ пăхса усраманнине пула, вăл пĕтĕмпех юрăхсăра тухнă. Халĕ ĕнтĕ кирек ăçта тухса çӳрес пулсан та ирĕксĕрех ахаль урапа кӳлме тивет.

Т. МАЙОРОВ.



«Волга» колхозри (Красноармейски р.) тимĕрçĕ С. В. Кузнецов юлташ 1935 çулталăпа колхозăн тимрĕç лаççинче ĕçлет. **Укерчĕк çинче:** Кузнецов юлташ колхоз валли рыдван тăвать

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Колхозсенче планлă заданисене тĕрĕс тумалла

Партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пымалли условисенчен пĕри вăл—ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕн тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн планĕсене тĕрĕс тăвасси, колхозниксен ĕçне тĕплĕн учета илесси тата колхозри счетоводствăна тĕрĕс йĕркелесе пыраси пулать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ мартăн 26-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, районсем исполкомĕсен тата партăн райкомĕсен вунă кунлă срок хушшинче тĕштырă тухăçлăхĕн, çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн заданийĕсене кашни колхоза çитермелле. Хальхи вăхăтра колхозсенче планлă заданисене бригадăсемпе звеносем тата вылăх-чĕрлĕх фермисем тăрăх туса çирĕплетеççĕ. Колхозсенче, бригадăсенче, звеносенче тата фермăсенче планлă заданисене тултарма татăклă меропритисем палăртаççĕ.

Çакна палăртас пулать; хăшпĕр районсенчи колхозсенче планлă заданисене тунă чухне пысăк йăнăшсем тăваççĕ. Çав йăнăшсем партипе правительствăн постановленине пурнăçа кĕртсе пынă чухне чăрмантарма пултараççĕ.

Тĕштырă тухăçлăхĕн планне тунă чухне пĕр çулхи тухăça кăна шута илеççĕ. Шупашкар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра вăтам шутпа кашни гектартан 22 центнер тĕштырă туса илме планланă. Анчах çак колхоз виçĕ çул хушшинче вăтам шутпа кашни гектартан 13 центнер тĕштырă туса илнĕ. Çапла вара çак колхоз членĕсене плана ирттерсе тултарма йывăр пулать, вĕсем тем пек тăрăшса ĕçленĕ пулсан та ĕçшĕн хушса тӳлессинчен тăрса юлма пултараççĕ.

Колхозсенче, бригадăсенче, звеносенче тата вылăх-чĕрлĕх фермисенче планлă заданисене тунă чухне малтанхи çулсенчи тырпул тухăçлăхне, çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне шута илмелле. Планлă задани пĕчĕк те, ытлашши пысăк та пулмалла мар.

Çакăн пек тĕслĕхсем те пур: хăшпĕр колхозсем тата бригадăсем пысăк тухăçлă тырпул туса илме май пур çĕртенех пĕчĕкрех тухăçлă тĕштырă туса илме палăртаççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец» колхозра 42 сурăхран 33 путĕк илсе пăхса çитĕнтерме, кашни сыснă аминчен 10 çăвăр илме планлă заданисене тунă чухне малтанхи çулсенчи тырпул тухăçлăхне, çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне шута илмелле. Планлă задани пĕчĕк те, ытлашши пысăк та пулмалла мар.

Çакăн пек тĕслĕхсем те пур: хăшпĕр колхозсем тата бригадăсем пысăк тухăçлă тырпул туса илме май пур çĕртенех пĕчĕкрех тухăçлă тĕштырă туса илме палăртаççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи «Красноармеец» колхозра 42 сурăхран 33 путĕк илсе пăхса çитĕнтерме, кашни сыснă аминчен 10 çăвăр илме планланă. «Красноармеец» колхозрах кашни бригадăрах пĕр пек тухăçлă тырпул—16,4-шар центнер туса илме палăртнă. Кунта кашни бригадăн çĕрĕсене, акмалли лаптăксене юлашки сул çинче удобренисем тăкса çемçетнине шута илмен. Паллах, пур бригадăн çĕрĕсем пĕр пек мар, пĕр бригадăн çĕрĕ лайăхрах, теприн начартарах пулма пултарать. Çавăнпа ĕнтĕ мĕнпур бригадăсене те пĕр пек планлă задани пани тĕрĕсех пулмасть.

Тырпул тухăçлăхне планланă чухне юлашки çулта пулнă тырпул тухăçлăхне кăна мар, колхоз, бригада тата звено çумне çирĕплетнĕ участоксенчи тăпран условийĕсене те, юлашки 3—4 çулхи тухăçлăха та шута илмелле. Çаксемпе пĕрлех тата колхоз организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен мĕнле пулнине, çуртăм вăйĕ тата машинăсем мĕн чухлĕ пулнине учета илес пулать.

Вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн планне тунă чухне вылăхсен ăратлăхне, вĕсем миçе çулта пулнине тата юлашки 3—4 çул хушшинче вĕсен продуктивлăхĕ мĕнле пулнине шута илмелле. Кун пек чухне планлă заданисем, район валли палăртнă планлă заданисенчен пĕчĕк пулмалла мар.

Плансене тунă чухне унăн кашни статьине колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕнче тĕплĕн сӳтсе-явмалла. Пухура кăтартса панă сĕнӳсене шута илни кирлĕ.

ЦУНХУ тата СССР Наркомземĕ, колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелле тунă май, колхозри счетоводствăна улшăнусемпе хушусем кĕртнĕ. Чăваш АССР Наркомземĕн тата районсенчи çĕрĕç пайĕсен колхозсенчи мĕнпур счетоводсене çĕнĕ йĕркепе паллаштармалла, ĕçре пулăшмалла, колхозри счетоводствăна тăтăшах контроль туса тăмалла, конкретлă ертсе пымалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине пирĕн республикăри колхозсенче производствăллă хастарлăха çĕклерĕ. Колхоз производствине тĕрĕс планлани тата колхозри учет ĕçне тĕрĕс туса пыни колхозниксен ĕç тухăçлăхне, тĕштырăсен тухăçлăхне, çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне пысăккăн ӳстерсе пыма пулăшмалла.

НИПЕН.

Дежурнăй команда организациленĕ

ЭЛЕК. Хураварти «Заветы Ильича» колхозăн пысăк пĕве пур. Çак пĕвене çурки шывран сыхласа хăварас майпа колхозра 6 çынтан дежурнăй команда организациленĕ. Вăл бригадăна 4 ватăр, шăчăсем, хăмасем илсе панă.

Ку бригада халĕ пĕве пуçĕнчи пăрсене касса тата каналти юра хырса тасатрĕ.

Çын пуçланса кайни çинчен лекци

ЭЛЕК. Апрелĕн 9-мĕшĕнче парткабинетра педкабинет заведующийĕ Теплов юлташ район центрĕнчи рабочисемпе служащисем валли «Произхождение человека» темăпа лекци вуласа пачĕ.

Лекци итлеме пынă çынсем çавăн пек темăсем тăрăх татах та тĕрлĕрен лекцисем вуласа пама ыйтрĕç.

Ив. МОСЕЕВ.

Клевер акаççĕ

СЕНТЕР, апрелĕн 16-мĕш. (**Телефонпа**). Мăн Сĕнтĕр ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 20 гектар çине клевер акса хăварчĕ.

С. НАЛИМОВ.

Освод активĕн канашлăвĕ

Апрелĕн 11-мĕшĕнче Чăвашсен Государство Филармони залĕнче хулари ОСВОД активĕн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта Чăваш ОСВОД спасательнăй службин начальникĕн заместителĕ Барабанов юлташ çурхи шыв вăхăтĕнче пулас инкек-синкексенчен мĕнле сыхланасси çинчен доклад туса пачĕ.

Çурхи шыв вăхăтĕнче ĕçлеме ОСВОД обществи 9 медпункт уçма палăртнă. Унта РОКК активĕнчен 180 çын ĕçлемелле.

Шыва путсан хăтаракан (спасательнăй) дружинăсем 12 çĕрте ĕçлеме тытăнаççĕ. Унта пурĕ 132 çын ĕçлемелле.

Çурхи шыв тулнипе кĕрешес тĕлĕшпе ОСВОД юлашки вăхăтра докладсемпе калаçусем 13 хут туса ирттернĕ. Унта пурĕ 1295 çын пулнă.

Доклад хыççăн пренисем пулчĕç. Ванюкова юлташ (ликерпа ăрех заводĕнчен) ОСВОД-ăн вырăнсенчи организацийĕсем предприятисенче япăх ĕçлени çинчен, вĕсене малашне лайăх ĕçлеме тытăнтарасси çинчен каларĕ.

Канашлу хыççăн концерт пулчĕ.

—o—

Вĕренӳ çулĕ вĕçленес умĕн

Чăвашсен Педагогика Институчĕн тур факультечĕсенче те юлашки курсенче программа тăрăх занятисем пулса пĕтрĕç. Халĕ ĕнтĕ студентсем экзамен пама хатĕрленме тытăнчĕç.

Вуламалли залра тата кабинетсенче иртен пуçласа çĕрлечченех харпăрăй тĕллĕн вĕренекен студентсем лараççĕ. Институтри профессорсемпе преподавательсем студентсен ыйтăвĕсем çине сисĕмлĕн те тимлĕн пăхаççĕ, вĕсем кашни ыйту тăрăхах консультаци пама хатĕр.

Студентсем пурте экзаменсене лайăх парас тĕллевпе социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Литература факультечĕн IV курсĕнче ССР Союзĕнчи халăхсен литературипе экзамен парса, 31 студент «отлично» тата «хорошо» отметкăсем илнĕ, «посредственно» отметка илнисем 4 студент кăна пулнă.

И. АЛЕКСАНДРОВ.

—o—

Ăнлантарса пани

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 13-мĕшĕнче «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата вылăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АСС Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» йышăннă постановленин 8-мĕш пунктĕнчи «**ĕçчунĕ**» сăмаха пур çĕрте те **ĕçлемелли** кун (рабочий день) тесе ăнланмалла.

Чăвашла пичетлесе кăларнă кĕнекен 17 страницинчи юлашки абзаца тӳрлетсе çапла вуламалла: «Кайăк-кĕшĕк пăхакан колхозниксене — кайăк-кĕшĕкрен çăмарта илмелли плана ирттерсе тултарнăшăн планран ирттерсе илнĕ çăмарта хисепĕнчен 15 процентне тата вĕсем çумне çирĕплетнĕ кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли планран ирттерсе пăхса ӳстернĕ кайăк-кĕшĕк чĕпписен çуррине памалла.

Чăваш АССР Государство Издательстви.

—o—

Атăл çинче

Атăл шывĕ юлашки талăк хушшинче 14 сантиметр хутшăннă.

Шыв горизончĕ — 132 сантиметр. Енер çанталăк тĕтреллĕ тăчĕ. Кăнтăрла тĕлĕнче çăмăр тата юр çума пуçларĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ
КИРПĔЧ тата ЧЕРЕПИЦА
тăвакан завода çуллахи сезонра тата яланлăха ĕçлеме арçынсемпе хĕрарăм
РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ
Общежити пур.
Адрес: Шупашкар хули, Волгострой поселокĕ, тел. № 7—46.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Балкан фронтĕнче ытларах активлă вăрçă ĕçĕсем **Югославире** пулса иртнĕ. Италь командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, итальянецсем Хĕвеланăç Югославири Книн хулине туртса илнĕ тата Шибеник портне çитнĕ. Итали тинĕс-çар флочĕпе пехотин чăçĕсем Цара йĕритаврашĕнчи утравсене хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Босна юханшывĕн анатри пайĕнчи айлăмĕнче тата Савăпа Дрина юханшывĕсем хушшинчи районра Германипе Италь авиацийĕ Югослави войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Топола патĕнчен кăнтăр енче Югослави дивизийĕ Германин мотомеханизированнăй войскисем пуçланă наступленине сирсе янă. Белград районĕнче, тет корреспондент, Югославин пĕр дивизийĕ Германи войскисене хирĕç çапăçать. Неготин районĕнче противник хупăрласа илнĕ югославсен чăçĕсем противнике хирĕç кĕрешме пăрахман-ха. Югослави войскисем, тесе çырать корреспондент, Скопле енпелле контрнаступлени тума пуçланă. Качаник пароходне, çавăн пекех Кратуеваца Крушеваца югославсем хӳтлеççĕ, вĕсем Германин темиçе офицерне, вăл шутрах пĕр генерала тытăнă иллĕ.

Çанталăк начар пулнă пулсан та, фронтра пур çĕрте те сывлăшпи вăйлăн активлă операцийĕсем палăраççĕ. Англипе Югослави авиацийĕ Вардар юханшывĕн айлăмĕнче, çавăн пекех Софипе Кюстендил районĕнче (Болгарире) Германи çарĕн коммуникацийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Югослави çарĕн пысăк пайĕ сыхланса юлнă, вăл тусем çине чакса кайнă, тесе шутлаççĕ.

Фронтăн **Греции участокĕнче**, Птолемес районĕнче (Хĕвеланăç Македонире), танксен соединенийĕсем хушшинче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Германи сводкинче каланă тăрăх, Çурçĕр Грецире кăнтăр еннелле пыракан моторизованнăй чăçсем Птолемеспа Козанине туртса илнĕ. Ытти чăçсем Салоники енчен кăнтăр еннелле наступлени туса пыраççĕ. Греци сводкинче каланă тăрăх, Германи войскисем Клисура — Козани — Сиатист еннелле малалла кайнă. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Грецине Англи войскисен çĕнĕ линине нимĕçсем татса каçайман. Хальхи вăхăтра Грецине Англи войскисем Адриатика тинĕсĕ патĕнчен Эгейски тинĕс патне çити тăсăлса выртакан вăйлă позицисене йышăнса тăраççĕ. Çак позицисем вырнаçса тăракан районсенче механизированнăй соединенисемпе питĕ хăвăрт наступлени туса пыма май çук. Грецири «Мессаже д'Атен» хаçат çапла çырать: Албанипе Македонири фронтсенче Греци войскисемшĕн лайăх положени пулса пырать. Македонипе Фракирен пĕлтернĕ тăрăх, тесе çырать хаçат, Германи пехотине хирĕç пулса иртнĕ çапăçусенче Греци пехоти хăйĕн пысăк пахалăхне кăтартнă. «Пройа» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Греци оборонин линийĕ — Ионически тинĕсĕн çыранĕсем патĕнчен Олимп урлă Салоники заливĕ патне çити таттисыпписĕр чăсăлса выртакан укрепленисен линийĕ пулса тăрать.

Албанире Греци войскисем оборонăн çĕнĕ линийĕ çине куçнă. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Итали войскисем Корча хулине (Албанипе Греци чиккинчен инçех мар вырăнта) пырса кĕнĕ.

Çурçĕр Албанире, Скутари патĕнчен çурçĕр енчи районра, Югослави войскисем пысăк мар атакăсем тунă.

Ыран апрелĕн 14-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем Мальта утравĕ çине пырса тапăннă.

* * *

Англипе Германи хушшинчи фронтра авиаци активлăхĕ палăрать. Ыран апрелĕн 15-мĕш тенĕ чух çĕрле, тенĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германи самолечĕсем Кăнтăр Англипе Шотландири аэродромсем тата портсен сооруженийĕсем çине пырса тапăннă. Çавăн пекех Германи хĕпăмаллă вăйĕсен тинĕс çинчи операцийĕсем пулса пынă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: апрелĕн 12-мĕшĕнче Норвеги çар карапĕ Çурçĕр Норвегири пĕр порт çине пырса тапăннă. Апрелĕн 14-мĕшĕнче кăнтăрла Англи бомбардировщикĕсем Германи территорийĕ çинчи, çавăн пекех Германи оккупациленĕ çĕршывсен территорийĕсем çинчи объектсем çине пырса тапăннă. Гаарленпа Лейден çывăхĕнчи (Голландире) электростанцисем çине тата Лейден çывăхĕнчи радиостанци çине бомбăсем пăрахнă. Голланди çыранĕ çывăхĕнче Англи самолечĕсем противникăн транспорт суднисен караванĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Ыран апрелĕн 15-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн пысăк соединенийĕсем Брестри тинĕс-çар бази çине татах тепĕр хут пырса тапăннă. Çак базăра Германин «Шарнгорст» тата «Гнейзенау» ятлă линкорĕсем пытанса тăраççĕ. База çине темиçе сехет хушши пыра-пыра тапăннă.

Сурçĕр Африкăра вăрçă операцийĕсем Ливипе Египет чиккинче, Соллум районĕнче сарăлса пыраççĕ. Юнайтед пресс агентствин Лондонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕпăмаллă вăйĕсен командующийĕ генерал Уэйвелл Англин Египетра кĕрешекен войскисене Мерса-Матрух патне çити чакма приказ панă (Сиди-Барранирен хĕвелтухăç енче). Çав корреспондентах çапла пĕлтерет: Германин Египета тапăнса кĕнĕ войскисенче 18—20 пин çын тата 1.400 танк шутланать. Германи сводкинче каланă тăрăх, Германи авиацийĕ Тобрук çине бомбăсем пырса пăрахнă. Англин çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш вăйĕсен командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Египета пырса кĕмелли вырăнта Англи авиацийĕ Германипе Италь войскисем çине бомбăсем пырса пăрахнă тата пулеметсенчен пенĕ. Киренаикăн тĕрлĕ районĕсенче, тенĕ коммюникере, Англи бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем Германипе Италин пĕр çĕре пухăннă войскисене салатса янă. Ыран апрелĕн 14-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Триполи çине — Германин Африка фронтне киракан подкрепленийĕсен бази çине вăйлăн бомбăсем пырса пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулман. Кăнтăр Африкăн авиацийĕн самолечĕсем, тенĕ Англи сводкинче, Комбольчăри аэродром çине пырса тапăннă.

Апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çыруçемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—3—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85. издательство конторин—0—23.

НТ 2848.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 227. ф. б. 58 84 п. л.

ЧУВАШСКИЙ
СЕЛЬСКОХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ НАРКОМЗЕМА СССР
об'являет прием студентов на 1941—42 учебный год на 1 курс полеводческого и зоотехнического факультетов.

В институт принимаются граждане СССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование (десятилетка, рабфак, техникум, училище, средняя школа взрослых, средняя медицинская школа и военное училище), либо получившие аттестат об окончании средней школы в порядке экстерната.

Все поступающие подвергаются приемным испытаниям по трем предметам: русский язык и литература, физика, химия.

Отличники принимаются в институт без испытаний.

К заявлению о приеме прилагаются: автобиография, аттестат в подлиннике, паспорт (предъявляется лично), три фотокарточки и справка об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных).

Приемные испытания будут производиться с 1 по 20 августа. Зачисление сдавших испытания в число студентов будет производиться с 21 по 25 августа.

На стипендию зачисляются студенты, получившие на приемных испытаниях по двум предметам отлично и по одному предмету не ниже хорошо. Отличники, поступившие в институт, зачисляются на стипендию.

Для лиц, нуждающихся в предварительном повторении предметов испытаний, при институте организуются месячные подготовительные курсы с 1 июля по 1 августа. Обучающиеся на курсах содержатся за свой счет. Институт предоставляет общежитие и обеспечивает курсы преподавателями.

АДРЕС ИНСТИТУТА: гор. Чебоксары, Чувашской АССР, ул. Ленинградская, 25.

2—1 Дирекция института.